ХЫПАР

Чăваш ачисен хаçачĕ

# Тантăш

6+

40 (4402) №, 2014, юпа, 2 (1931 çулхи кăрлачăн 12-мĕшĕнче тухма тытăннă).

Хакĕ ирĕклĕ.
Индексĕ: 54802.

ÇĔНĔ ĂРУ

## Пулас футболистсем

**Степа Андреев, Владик Урмаков, Саша Кожевников, Артем Яковлев тата Дима Лукин – хастар футболистсем. Физкультура урокĕнче çеç мар, шкул хыççăн та вĕсем стадионта т футболла выляма вăхăт тупаççĕ.**

Акă паян та вĕсем, хĕртсе пăхнă хĕвеллĕ кун, урамра. Степа хапхине мечĕк тапса кĕртессишĕн пурте ăшталанаççĕ. Шурăскере пĕри, унтан тепри, виççĕмĕшĕ, тăваттăмĕшĕ тапрĕ.

– Паян кăмăл лайăх манăн, хама хирĕç ыткăнса килекен мечĕке ярса тытатăпах! – кăшкăрать Степа хавхалануллăн.

Акă унччен те пулмарĕ, унăн хапхине мечĕк вĕçсе те кĕчĕ.

– Эх, мухтанмалла марччĕ иккен. Юрĕ-çке, кунта хамăр çеç. Ăмăртăва кайсан вара тимлĕхе çухатмастăпах. Юратнă шкул чысне çӳлти шайра тытмалла вĕт пирĕн, – терĕ арçын ача кулкаласа.

Чупса ывăннă хаваслă йыш канма ларчĕ.

– Чаплă футболист пулас килет. Ун чухне вара килтисем мана сенкер экранпа çеç курса ларĕç, – сăмах пуçарчĕ хаваслă Владик.

– Шкултан вĕренсе тухиччен вăхăт чылай-ха. Унччен хамăн пултарулăха вăйлă аталантарас тетĕп. Тен, сан пекех футболист пулăп, – тет аллинчи мечĕке çавăрттарса тăракан Степа.

– Ай, мĕн тери аван пулĕччĕ вара! Эпĕ хамăн ентешĕмсемпе мĕн тери мăнаçланнă пулăттăм, – хăпартланчĕ Саша та.

– Лайăх ĕмĕтсемпе пурăнатăр эсир. Тĕрĕс тăватăр, класс ертӳçи калашле пултарулăха мĕн пĕчĕкрен аталантармалла, – палăртрĕ хăй шухăшне Артем.

– Çав ĕмĕтсене пурнăçа кĕртиччен малтан пирĕн районта, республикăра палăрмалла. Ăмăртусенче чи хастаррисен йышне кĕмелле, – терĕ Дима Лукин.

...Стадион каллех хаваслă шавпа тулчĕ. Мечĕке хапхана кĕртес тесе арçын ачасем малалла ыткăнчĕç.



Элиза ВАЛАНС.

Вăрнар районĕ,
Калинино шкулĕ.
**АВТОР сăн ӳкерчĕкĕ.**

ÇЫРĂНТАРУ – 2015

## Тепĕр икĕ кун, ЮПАН 4-мĕшĕччен, "Хыпар" Издательство çурчĕн кăларăмĕсене йӳнĕрех хакпа çырăнма пулать!

| КĂЛАРĂМСЕМ | ИНДЕКС | Почта уйрăмĕсенче | «Чăваш пичет» киоскĕсенче | «Советская Чувашия» киоскĕсенче | Редакцире |
|---|---|---|---|---|---|
| Хыпар | ВД800 | 703,86 | 288 | 279 | 144 |
| Хыпар | В8353 | 286,08 | 150 | 141 | 90 |
| Самраксен хаçачĕ | ВД804 | 329,28 | 234 | 231 | 144 |
| Хĕрарăмĕ | В1515 | 296,88 | 222 | 213 | 141 |
| ...пăх | В1524 | 188,82 | 114 | 111 | 81 |
| Кил-çурт, хуçалăх | В4806 | 167,88 | 114 | 111 | 81 |
| Хресчен сасси | В4838 | 353,82 | 168 | 162 | 114 |
| Хресчен сасси | В3887 | 167,88 | 108 | 105 | 81 |
| Тăван Атăл | В1529 | 279,48 | 252 | 246 | 198 |
| Капкăн | В4608 | 163,44 | 150 | 126 | 108 |
| ЛИК | В3429 | 120,36 | 120 | 120 | 100 |
| Вести Чувашии | В4807 | 269,28 | 192 | 186 | 144 |
| Собрание законодательства Чувашской Республики | В4847 | 629,58 | 660 | 660 | 570 |
| Тантăш | В4802 | 256,08 | 138 | 132 | 90 |
| Самант | В3208 | 157,02 | 162 | 156 | 120 |
| Тетте | В3771 | 125,52 | 114 | 111 | 90 |

**Хисеплĕ ашшĕ-амăшĕ, аслашшĕ-асламăшĕ, кукашшĕ кукамăшĕ!**
**Эсир те хăвăр кăмăллакан кăларăмсене çыранна чухне ачăрсене, мăнукăрсене парнесĕр ан хăварăр! Вĕсем "Тантăш" хаçата, "Тетте", "Самант" журналсене алла илсе вуласшăн.**

# Нимĕнле йывăрлăха пăхмасăр — çĕнтерӳ патне!



Ачана пĕчĕкренех сывă пурнăç йĕркине хăнăхтармалла. Шкулсенчи физкультура вĕрентекенĕсем çакна питĕ лайăх ăнланаççĕ, çитĕнекен ăрăвăн сывлăхĕшĕн хăйсене яваплă туяççĕ. «Ачасем сăмаха мар, хăтланăша ас туса юлаççĕ. Пĕчĕкскере пĕр сехете яхăн вĕрентсе каласан, ун хыççăн сăмса шăлсан вăл эсир сăмсăра шăлнине çеç асĕнче хăварĕ», – тет Армен Джигарханян киноактер. Чăнах та çапла пулĕ. Сăмахран, физкультура вĕрентекенĕ хăй те çак ĕçе ахальтен суйламасть-çке.

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Çĕнĕ Атикасси шкулĕ те тахçан, пĕр çирĕм çул каялла, спорт енĕпе палăрсах кайман. Анапăра иртнĕ спорт тупăшăвĕсенчен икĕ хутчен çĕнтерсе таврăннă хыççăн вара çак шкул ячĕ Раççейĕпех янăрарĕ. Паллах, команда çитĕнӳ тăвасси тренертан та чылай килет. Хăвăртрах, вăйлăрах тата çӳллĕрех пулма кам хăнăхтарать-ха? Ачасемпе тĕллевлĕ ĕçлекен физкультура вĕрентекенĕ.

Çĕнĕ Атикасси шкулĕн ачисене ку тĕлĕшпе, чăнах та, ăнăçнă. Вĕсене сывă пурнăç йĕркине хăнăхтараканĕ – Светлана Николаевна Петрейкина. Ăста педагог хăй те ача чухнех спортпа туслă пулнă. Аслисенчен хăпма пĕлмен: «Йĕлтĕрпе ярăнма мана та пĕрле илсе кайăрха», – тесе йăлăннă. Пушă вăхăта яланах тренировкăра ирттернĕ, спорт маçтăрĕ пулма тĕллев лартнă. Василий Петрович Ефимов тренер патĕнче хатĕрленекенскер унăн ĕç-хĕлне килĕштернĕрен физкультура вĕрентекенĕ пулма ĕмĕтленнĕ. Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Питĕркасси шкулĕнчен вĕренсе тухсан шухăшне пурнăça кĕртес тесе Мурманск тăрăхнех çитнĕ. Унта та хастарлăхпа палăрнă вăл. Йĕлтĕрпе чупса тĕрлĕрен ăмăртусенче çĕнтернĕ, кĕçех çак енĕпе спорт маçтăрĕн кандидачĕн нормативне пурнăçланă.

Алла диплом илсен Светлана Николаевна тăван района таврăннă, Çĕнĕ Атикасси шкулĕнче ĕçлеме пуçланă. Çамрăк специалиста малтанах питĕ йывăр килнĕ: пурлăх бази çук, ачасенче çĕнтерес, пьедесталăн çӳлти картлашки çине хăпарас тĕллев курăнмасть...

– Районти ăмăртусенче манăн вĕренекенсем юлашки вырăна тухни кăмăла çапса хуçатчĕ. Çакăн пек ăнăçусăрлăхсене чĕре патне илеттĕм. Питĕ кӳренмеллеччĕ. Çавăн чухне хам ума тĕллев лартрăм: пур пĕрех çитĕнӳ патне çитĕп, манăн шкула ăмсанĕç, ачасем ăмăртусенче çĕнтерĕç. Канăçа пĕлмесĕр ĕçлеме пуçларăм вара, – пуçламăш утăмсене аса илет С.Н. Петрейкина.

Спорт çыннисен пахалăхĕсенчен пĕри шăпах çакă ĕнтĕ – тĕллев лартса нимĕнле йывăрлăха пăхмасăр ăна пурнăçлама хал çитерни. Çапла пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн Çĕнĕ Атикасси шкулĕ ăмăртусенче çĕнтерсе пынă, республика шайĕнче те тăтăшах малти вырăнсем йышăннă. Халĕ çирĕппĕнех калама пулать: пултаруллă вĕрентекен тахçан хăйĕн умне лартнă тĕллевне чăн-чăнах та пурнăçларĕ. Шкул команди пĕлтĕр Пĕтĕм Раççейри «Президент тупăшăвĕсенчен» çĕнтерӳпе таврăннă хыççăн пушшех те çакăнпа килĕшетĕн.

– Ĕçлени тухăçне паратех. Эпĕ ачасене тĕрĕс çул çине кăларса сывă пурнăç йĕркипе пурăнма хăнăхтаратăп, – тет пултаруллă тренер.

Кашни педагогăн хăйĕн вĕренекенĕсемпе мăнаçланас килет, унăн ĕçĕ вĕсенче курăнать-çке. Ачисем çитĕнӳ туни мĕн тери савăнтарать!

– Малтанхи вĕренекенсем нихăçан та манăçмаççĕ. Тĕслĕхрен, Олег Сергеев. Пĕрре пăхсанах паллă: спорт валлиех çуралнă вăл. Унпа ыттисенчен ытларах ĕçлеме тăрăшрăм. Çăмăл атлетикăра çитĕнӳ тăваканскер Олимп резервĕн училищине вĕренме кĕнĕччĕ. Шел, хăш-пĕр лару-тăрăва пула çак çула малалла тăсасси пулмарĕ унăн. Çавăн пекех Анюта Илюшина, Женя Сидоров хăй вăхăтĕнче пысăк шанăç паратчĕç. Хальхи вĕренекенсенчен те спортсмен пулмаллисем пур-ха. Тĕслĕхрен, Володя Долгов. Хĕвел ятлă çăлтăр тесе чĕнетĕп ăна ытарлăн. Настя Семенова, Маша Тимешкова, Миша Софронов та пысăк кăтартусемпе савăнтараççĕ.

Светлана Николаевнăн ывăлĕ Андрей та – йĕлтĕрпе чупас енĕпе спорт маçтăрĕн кандидачĕ. Шкулта чухнех ăмăртусенче тăтăш мала тухнă. Халĕ Мускаври аслă шкулта вĕренекенскер унти футбол командинче вылять.

– Пуçне усал шухăшсем ан кĕччĕр тесе ывăлăма спорта явăçтартăм, – тет шкулта çирĕм тăваттăмĕш çул ĕçлекен педагог. «Улми йывăççинчен аякка ӳкмест», – тесе ватăсем тĕрĕсех каланă çав. Юратнă тĕпренчĕкĕ те спортра çитĕнӳ тунишĕн амăшĕ, паллах, хĕпĕртет.

– Ачасене манăн тав сăмахĕ калас килет. Вĕсем суймаççĕ. Çан-çурăма çирĕплетмелли хăнăхтарусене мĕн пур тӳсĕмлĕхпе пурнăçлаççĕ. Çакă йăлтах хăйсене кирлине аван ăнланаççĕ. «Вĕрентекен çук-ха, нимĕн те тумастпăр», – тесе лармаççĕ. Мĕне хăнăхтаратăн, çавăнтан та килет пулĕ. Анапăри Пĕтĕм Раççей шайĕнчи ăмăртусенчен икĕ хутчен çĕнтерсе таврăннине пысăк çитĕнӳ тесе шутлатăп. Ачасене тав çав йывăрлăхсене, çирĕп ыйтнине чăтнăшăн.

Шкулта вĕреннĕ вăхăтра хăшне-пĕрне вĕрентекен ытла нумай ыйтнă пек те туйăнма пултарĕ. «Мана курайманнипе çапла хăтланать», – тесе шухăшлакан та пур. Анчах юлашки шăнкăравпа шкул алăкне хупса тухса кайсанах вĕрентекенсене аса илсе тав тума пуçлаççĕ çавсем. Вĕсем çирĕп ыйтни пурнăçри йывăрлăхсене те çĕнме пулăшать-çке. Вĕренекенсен тав сăмахĕсене илтсен Светлана Николаевна та чунтан савăнать, урокĕсем кашнин пурнăçĕнче ырă йĕр хăварнишĕн хĕпĕртет.

***Виктория МАЙОРОВА.***

# Юбилей ячĕпе сана, шкулăм!



Мăн Этмен шкулĕ – çĕр çулта. Çак сумлă уява паллă тума хăнасем ир-ирех йышлă пуçтарăнчĕç. Вĕренекенсем вĕсене ăш пиллĕн кĕтсе илчĕç. Мăн Этменсем хăнана пăхма пĕлеççĕ – пуçтарăнакансене тӳрех классене вĕри чей ĕçме илсе кайрĕç.

Уява çак шкултан вĕренсе тухнă маттурсем – «Чăваш Ен» радиовĕн ĕçченĕ Эльвира Тимофеева тата «Классика» капелла солисчĕ, Чăваш патшалăх оперăпа балет театрĕн хор артисчĕ Михаил Иванов – уçрĕç. Вĕренӳ министрĕн пĕрремĕш çумĕ Светлана Владимировна Петрова та килсе çитрĕ. Шкул юбилейĕн ячĕпе вăл пурне те ăшшăн саламларĕ, музыка класне синтезатор парнелерĕ. Çавăн пекех Хĕрлĕ Чутай район администрацийĕн пуçлăхĕ Александр Башкиров тата район пуçлăхĕ Александр Степанов та килчĕç. Александр Викторович Башкиров шкула çирĕм пин тенкĕлĕх сертификатпа савăнтарчĕ. «Коминтерн» ял хуçалăх кооперативĕн директорĕ Альбина Новикова, районти вĕренӳ пайĕн пуçлăхĕн çумĕ Ольга Митрофанова, профсоюз председателĕ Татьяна Улянды пурне те уяв ячĕпе саламларĕç, малашне те ăнăçу сунчĕç.

Сцена çинче хаклă хăнасем, çак шкултан вĕренсе тухнисем, кунта ĕçлекенсемпе ачасем çак пĕлӳ çуртне хута янăранпа пĕр ĕмĕр çитнĕ ятпа нумай ăшă сăмах каларĕç, хăйсен пултарулăхĕпе савăнтарчĕç. Уяв пурне те килĕшрĕ. Мăн Этмен шкулĕ ĕмĕрех пурăнтăрччĕ, унтан вĕренсе тухакансем вара яланах ырăпа палăрччăр!

***Аня МИХЕЕВА.***

Хĕрлĕ Чутай районĕ,
Мăн Этмен шкулĕ.

*Страницăна Лариса ПЕТРОВА (тел. 28-85-69) хатĕрленĕ.*

Тантăш
чăваш ачисен хаçачĕ

● УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви; Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

● ХАÇАТ ИНДЕКСĔ:
54802 - (çур çула) - Чăваш Республикинче,
11466 - республика тулашĕнче.

● Редакципе издатель адресĕ:
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "Хыпар" Издательство çурчĕ" АУ техника центрĕнче калăпланă."Чувашия" ИПК" АУО типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "ЧУВАШИЯ" ИПК" ДИРЕКТОРĔ:
Тел.: 56-00-23

● ДИРЕКТОР - ТĔП РЕДАКТОР тивĕçĕсене пурнăçлакан – Г.А.МАКСИМОВ

● ТЕЛЕФОНСЕМ

| | |
|---|---|
| директор-тĕп редактор: | 56-00-67 |
| редактор, çырусемпе тата юнкорсемпе ĕçлекен пай: | 28-83-86 |
| шкул ачисен пайĕ: | 28-85-69 |
| спорт тата экологи пайĕ: | 56-11-80 |
| право, кăмăл-сипет пайĕ: | 28-83-89 |
| факс: | (8352) 56-15-30 |
| бухгалтери: | 28-83-64 |

● РЕДАКТОР
В.ФЕДОРОВ

● НОМЕР ВУЛАВÇИ
Л.ПЕТРОВА

● КАЛĂПЛАВÇĂ
Н.ПЕТРОВА

● ЭЛЕКТРОН АДРЕС:
e-mail: tantas@list.ru

● ТИРАЖ
1693 экз.
çав шутра Чăваш Республикин тулашĕнче – 191 экз.

● ЗАКАЗ
№ 3738
Пичете юпа уйăхĕн 1-мĕшĕнче алă пуснă.

● ПИРĔН САЙТ:
www.hypar.ru

Газета «Тантăш» («Ровесник») зарегистрирована Управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций (Роскомнадзор) – свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ТУ21-00306 от 10.12.13 г.

Ⓟ паллăпа реклама материалĕсене палăртнă

Пичете графикпа 15 сехетре алă пусмалла, 14 сехет те 00 минутра алă пуснă.

Тантӑш 3
40 №, 2014, юпа, 2

## Ӳкересси – чун киленӗҫӗ

**Красноармейски районӗнчи Мӑн Шетмӗ шкулӗнче маттур ача нумай. Вӗсенчен пӗри – пиллӗкмӗш класра вӗренекен Алена Егорова.**



Сӑпайлӑ та тӑрӑшуллӑскер пӗрремӗш класранпах отличниксен йышӗнче. Тӗрлӗ конкурса хутшӑнса палӑрать. Вырӑс чӗлхи предметне ытларах юратнӑран унпа олимпиадӑсене хатӗрленет. Малти вырӑнсене те сахал мар йышӑннӑ. Ҫак предметпа шкулта кружок йӗркелесен вара Алена чунтан хӗпӗртенӗ. Унта юратнӑ предмета тата лайӑхрах та, тарӑнрах пӗлме май пур-ҫке. Урокра мӗн ӑнланманнине кружокра ҫирӗплетме пулать.

Ӳнер кружокне те хаваспах ҫырӑннӑ. Пилӗк ҫул унта ӳкерет. Ӑсталӑхӗ те палӑрмаллах ӳснӗ. Ҫакна хӗр ачан сывӑх ҫыннисем те, вӗрентекенсем те сиснӗ. Ӑна вӗсем тӑтӑшах мухтаҫҫӗ, хавхалантараҫҫӗ. Хавхалантару ҫунат хушать ҫеҫ. Ку – Аленӑшӑн чун киленӗҫӗ.

Пушӑ вӑхӑтра чӗр чунсем ҫинчен ҫырнӑ хайлавсем вулама кӑмӑллать. Кӗҫӗн туссен тӗнчи питех те кӑсӑклантарать хӗр ачана. Ҫавӑнпах вӑл вӗсем пирки нумайрах пӗлесшӗн ӑнтӑлать.

Ӑшӑ кӑмӑллӑ та ҫемҫе чӗреллӗскер ҫитӗнсен тухтӑр пулса ӗҫлесшӗн. Чирлисене сыватма, пулӑшма чунтан ӗмӗтленет.

## «Пур чӗрӗ чуна та шеллетӗп»

**Пӗрремӗш класранах вӗренӳ отличници Алла Яковлева ҫиччӗмӗш класра ӑс пухать.**

Спортпа туслӑскер икӗ ҫул ӗнтӗ ирӗклӗ кӗрешӳ секцине ҫӳренӗ. Ҫак ӑсталӑх вӑрттӑнлӑхӗсене пӗлме, ӑнланма унта ҫырӑннӑ вӑл. Тренерӗ Владимир Николаевич Григорьев та тӑрӑшуллӑ пикене тӳрех асӑрханӑ. Тӗрлӗ ӑмӑртӑва илсе кайма пуҫланӑ. Вӑл хистенипех республика шайӗнче иртекен тупӑшӑва та хутшӑннӑ Алла. Унтан виҫҫӗмӗш вырӑна тухса тавраннӑ. Ӑмӑртӑва килнӗ ачасем йышлӑн пухӑннипе малти вырӑна ҫӗнсе илме ҫӑмӑлах пулман ӑна.



Иккӗмӗш класра вара вӑл ҫӑмӑл атлетика секцине ҫырӑнма шут тытнӑ. Шухӑшне пурнӑҫласан чунтан хӗпӗртенӗ. Халӗ районти, республикӑри кроссенче, ӑмӑртусенче тӑтӑшах палӑрать. Акӑ нумаях пулмасть Шупашкарта «Советская Чувашия» хаҫат парнисемшӗн иртнӗ эстафетӑна та хутшӑннӑ. Чылай команда тупӑшнӑ унта. Аллӑсен ушкӑнӗ ҫӗнтерейменпулсан та уншӑн кулянмасть вӑл. Малашлӑхра чылай ӑмӑрту-ҫке, унта вара ҫӗнтеретех.

Тренировкӑсене пӗр сиктермесӗр ҫӳреме тӑрӑшать Алла. Вӑл е ку сӑлтава пула унта килеймесен урамра хӑй тӗллӗн чупать. Унсӑрӑн чунӗнче темле канӑҫсӑр пек туйӑнать ӑна.

Ҫепӗҫ чӗреллӗ пике сӑвӑсемпе калавсем те ҫырать. Нумайӑшӗ – ҫемйине, амӑшне, пиччӗшӗсене халалланисем. Ҫут ҫанталӑк илемӗпе киленме кӑмӑллаканскер, ӑна хаклама пӗлекенскер ун пирки те сӑвӑсем шӑрҫалать. Чылай хайлавӗ район хаҫатӗнче те тӑтӑшах пичетленет.

Пур ҫӗрте те ӗлкӗрме тӑрӑшакан хӗр упраҫ тавра курӑмне яланах анлӑлатать. Библиотекӑна ҫӳрет, тӗрлӗ паллӑ ҫын, ентешӗсем ҫинчен ҫырнӑ кӗнекесене вулать.

Кӗнекепе, хаҫат-журналпа ачаранах туслӑ пулнине пӗлтерчӗ Алла. Кӗҫӗн класра «Тетте» журнала алӑран яман, халӗ «Тантӑш» хаҫата «шӗкӗлчет». Малашне сӑвви-калавне те унта ярса парасшӑн вӑл.

Ҫивӗч ӑс-тӑнлӑскер вӗренӳре ҫеҫ мар, юрӑ-ташӑра та хастар. Ача садӗнчех пианино калама, юрлама вӗреннӗ. Ку талант ӑна ашшӗпе амӑшӗнчен куҫнӑ ахӑртнех. Амӑшӗ ачаранах юрлама ӑста, халӗ тӗрлӗ уявра хӑйӗн уҫӑ сассипе ҫывӑх ҫыннисене савӑнтарать. Ашшӗ вара ӑста купӑҫҫӑ. Улми йывӑҫҫинчен аякка ӳкмест ҫав. Акӑ Алла та ҫак енӗпе маттурлӑхне кӑтартать. Шкулти тӗрлӗ мероприятире юрлать, ташлать. Килӗнче синтезатор та пур унӑн. Тунсӑх пусать-и е савӑнӑҫ-и – ун умне ларса асамлӑ кӗвӗ шӑрантарать, юрлать.

Ҫут ҫанталӑк тусӗ килӗнче тӗрлӗ чечек ӗрчетет. Амӑшӗпе пӗрле тем тӗрлине те лартнӑ. Тӗлӗнтермӗшли те чылай. Халӗччен ниҫта тӗл пулман йышшисене акса ӳстерме тӑрӑшаҫҫӗ вӗсем.

– Хӑшӗ-пӗри ҫулла ҫеҫке ҫурать, хӗлле вара типсе ларнӑпа пӗрех. Ҫуркунне пӑхатӑн та – вӑл ем-ешӗл, чӗрӗлнӗ. Питӗ интереслӗ вӗсене сӑнама, – тет Алла кӑмӑллӑн.

Ырӑ чунлӑскер ҫӗр ҫинчи пур чӗрӗ чуна та шеллет. Май пулсан вӗсене хӑйӗн хӳттине илӗччӗ вӑл. Уйрӑмах килсӗр, хуҫасӑр кушаксемпе йытӑсене курсассӑн чунӗ ыратать. Ӳссе ҫитӗнсен вӗсем валли усрав ҫурчӗ уҫассишӗн ӗмӗтленет. Килӗнчи тӑвата кушаккипе икӗ йыттине питӗ юратать Алла. Кроликӗсене те пӗр май лӑпкаса ачашлать. Епле хитре-ҫке ҫемҫескерсем! Аллинчен пӗрре те ямӗччӗ вӑл вӗсене. Уйрӑмах ҫурисем питӗ илемлӗ! Мӗнле ҫитӗннине сӑнама ҫав тери кӑсӑклӑ! Кӗҫӗн тусӗсене кашнинчех тутлӑ апатпа сӑйлать, вӗсемпе выляса йӑпанать.

Пушӑ вӑхӑтра вара Алла тем те пӗр ҫыхма кӑмӑллать, ҫывӑхри вӑрмана уҫӑлма ҫӳрет, тӗрлӗ прическа тӑвать. Пилӗк таран ӳснӗ вӑрӑм ҫӳҫне тем тӗрлӗ те капӑрлатать. Иккӗмӗш сыпӑкри йӑмӑкӗ хӑнана пырсан вара унӑн ҫӳҫӗпе хаваспах аппаланать.

Хайне пур ҫӗрте те тӗрӗслесе пӑхма шут тытнӑ тейӗн Аллӑна. Спортра, вӗренӳре, юрӑ-ташӑра ҫитӗнӳ чылай. Яланах ҫӗннине пӗлме ӑнтӑласшӑн вӑл. Нумай ют чӗлхе те вӗренес кӑмӑллӑ. Халӗ акӑлчан чӗлхине ытларах тимлет. Пур предметпа, ҫав шутра акӑлчан чӗлхипе те, пӗтӗм «пиллӗк» паллӑ унӑн. Пӗр класри ачасене те хаваспах пулӑшать.

Аслӑ пӗлӳ илме журналистика енӗпе вӗренме каяс шухӑшлине палӑртрӗ. Анчах ун пирки халех татӑклӑн калаймасть-ха вӑл. Шкул пӗтеричченех тен, шухӑшӗ те улшӑнӗ. Кӑна вара вӑхӑт кӑтартӗ.

## «Фантастика тӗнчи илӗртет»

**Ку шкулта пултаруллӑ ача та чылай. Акӑ ҫиччӗмӗш класра вӗренекен Вика Юдина, сӑмахран, тӗрлӗ предмет конкурсӗсене, ӑслӑлӑх викторинисене хутшӑнаканскер, шкул чысне миҫе хут хӳтӗлемен-ши?!**



Дипломсемпе грамотӑсем темӗн чухлех. Яланах малти вырӑна тухма тӑрӑшать вӑл. Пӗтӗм Раҫҫейри «Олимпус» ҫамрӑксен чемпионачӗнче те вырӑс чӗлхи предметне еплерех пӗлнине кӑтартса виҫҫӗмӗш степеньлӗ медале тивӗҫнӗ. «Ылтӑн руно» тӗнчери ӳнер культурин историйӗпе иртекен вӑйӑ-конкурса та хутшӑннӑ вӑл. Ҫак тупӑшу та Пӗтӗм Раҫҫей шайӗнче пулнӑ. Вӑл тест мелӗпе иртнӗ, ачасен 50 яхӑн ыйтӑва хуравлама тивнӗ. Вика тӑваттӑмӗш вырӑна тухма пултарнӑ. Маттур!

Ҫамрӑк ҫул ҫӳрев инспекторӗсен отрядӗнче те хӑйне тивӗҫлипех кӑтартнӑ вӑл. Ӑмӑртура малти вырӑн йышӑнассишӗн чунтан тӑрӑшнӑ. Велосипедпа чупса пӗрремӗш тухнӑ. Ҫул ҫӳрев правилисене пӗлессинче, пӗрремӗш пулӑшу парассинче тата ытти конкурсра тупӑшнӑ.

Хастар та тӑрӑшуллӑскер чун киленӗҫне ӳкерӳре тупнӑ. Ҫавӑнпах ӳнер кружокне те ҫырӑннӑ. Пуҫра шухӑшласа кӑларнӑ пӗр-пӗр сӑнара, пейзажа, чӗр чуна хут ҫине куҫарасси йывӑрах мар уншӑн. Вӗсене вӑл пӗр альбома пухса пырать. Тен, кайран курав та йеркелӗ-и? Пӗлме ҫук. Ӗмӗчӗ вара унӑн капашсӑр пысӑк.

Кунсӑр пуҫне Вика спортпа туслӑ. Малтан ирӗклӗ кӗрешӳ, халӗ вара ҫӑмӑл атлетика секцине ҫул такӑрлатать. Йӗлтӗрпе чупма питӗ килӗшет ӑна. Спортӑн ҫак енӗпе вӑл тӗрлӗ ӑмӑртӑва та хутшӑнать. Уҫӑ сывлӑшра йӗлтӗр ҫине тӑрса чун каниччен ярӑннине нимӗн те ҫитмест.

Ҫак секцие унӑн ҫывӑх юлташӗ Алла та ҫӳрет. Ҫавӑнпа унта хӗр ачасене кичем мар, тепӗр чух пӗр-пӗринпе ӑмӑртмалла чупаҫҫӗ. Тренировкӑсем яланах хаваслӑ иртеҫҫӗ. Викӑпа Алла пӗр ача садне, пӗр ушкӑна ҫӳренӗ. Ҫавӑнтанпа туслӑ вӗсем. Хуйхи-суйхине те, савӑнӑҫне те пӗрле пайлама хӑнӑхнӑ хӗр пӗрчисем. Канмалли кунсенче, тӗрлӗ ялта пурӑнаҫҫӗ пулсан та, пӗр-пӗрин патне хӑнана ҫӳреҫҫӗ. Шкултан вӗренсе тухсан тусӗпе ҫыхӑну татӑлмасса чунтан шанать Вика.

Кӗнеке вулама юратаканскер фантастика, романтика жанрӗнчи хайлавсене кӑмӑллать. Вӗсенчен чи килӗшекенни – «Джек – покоритель великанов». Унта юрату историйӗ те, фантастика та ҫителӗклех. Пурнӑҫра пулма пултарайман япаласен тӗнчи илӗртет Викӑна.

– Унта йӑлтах урӑхла вӗт-ха, тӗлӗнтермӗшсем кашни утӑмрах. Ҫав йышши хайлавсене вулама та питӗ интереслӗ, хӑв ӑҫта ларнине те манса каятӑн тепӗр чухне, – кӑмӑллӑн кулать хӗр пӗрчи.

Кӗнеке-журналпа туслӑ Вика хӑй те калавсем, сӑвӑсем ҫырать.

Кӗҫӗн класранпах ташлама кӑмӑллаканскер шкулти ташӑ ушкӑнӗнче ӑсталӑхне ӳстерет. Ытларах эстрада, ҫамрӑксен, хальхи ташӑсене лартаҫҫӗ. Тӗрлӗ конкурса хутшӑнса хӑйсен пултарулӑхӗпе куракансене тӗлӗнтереҫҫӗ. Шкулта ҫак енӗпе кружок пулнӑ тӑк унта ачасем хаваспах ҫӳреҫҫӗ. Халӗ вара вӗсем хӑйсем тӗллӗн пухӑнса репетицисем иртереҫҫӗ.

Ырӑ кӑмӑллӑ Вика пурнӑҫра тӗл пулакан пӑтӑрмахсене пӑхмасӑрах ҫитӗнӳ патне ӑнтӑлма тӗллев лартнӑ.

Красноармейски районӗ,
Мӑн Шетмӗ шкулӗ.

## Ылтăн тупра

# Эпир анне патĕнче хитре пӳртре пурăнатпăр…

Пахчара сухан пуçтарнă чухне хырăм çав тери выçрĕ. Эх, çак вăхăтра анне пĕçернĕ кукăль сĕтел çинче ахалех выртать пулĕ те-ха. Анчах пӳрте кĕрейместпĕр. Алăка тахăшĕ пысăк çăрапа питĕрсе хăварнă. Пире епле манма пултарнă-ха вĕсем? Ых!

– Аппа, тетте тупса парха, каннă вăхăтра пĕрех хутчен пуканепе калаçса хырăм выççине ирттерем, – терĕм ассăн сывланă май.

– Санăн Марукусемпе Тарукусем пурте пӳртре-çке. Епле кĕрсе илмелле-ха вĕсене? – сăмахларĕ хайхискер ман çине хурлăхлăн пăхса.

Туятăп, унăн та хырăмĕ выçнă. Çавăнпа сӳрĕк вăл. Унтан:

– Чим, атя, пӳрнесене калаçтарар. Атте кăнтăрлана таврăниччен, – сăмахларĕ вăл сасартăках.

– Ан тĕлĕнтер-ха! Эпĕ сăмахран хам пӳрнесем пупленине ĕмĕрне те курман? – тĕлĕнтĕм алла çавăркаласа.

Вăл вара сак çине вырнаçса пӳрнисене хуçлатса пынăçемĕн:

– Пуç пӳрне, атя ларма.
– Пуç ыратать, пымастăп.
– Шĕвĕр пӳрне, атя ларма.
– Шĕвĕртетĕп, пымастăп.
– Вăта пӳрне, атя ларма.
– Вăтанатăп, пымастăп.
– Ятсăр пӳрне, атя ларма.
– Ятлаççĕ, пымастăп.
– Кача пӳрне, атя ларма.
– Качча каятăп, пымастăп.
– Ай! Мĕн тери кăсăклă!

– Халĕ тата ура пӳрнисем пирки мĕн те пулин каласа парсам, – çулăхрăм ун çумне.

– Вĕсем пирки пĕлместĕп. Атя мĕн те пулин урăххине юптарам, – терĕ хавасланса.



Чăвашсене эп хам куртăм:
Вĕсем çапла канаççĕ –
Ак çапла, ак çапла,
Вĕсем çапла канаççĕ.




Вĕлтĕр-вĕлтĕр вĕлтĕрен,
Вĕлтĕренĕн тăррине
Вутта хуçса пăрахмалла.
Эс те чипер, эп те чипер,
Чăн чиперри кĕтесре.



Эпир анне патĕнче
Хитре пӳртре пурăнатпăр.
Эпир тăваттăн пĕр тăван –
Ак çакăн пек куçлă,
Ак çакăн пек пуçлă.
Вылятпăр та кулатпăр,
Пурте çапла тăватпăр.

Ах, тăхлачăм
Улька пур,
Санăн хĕрӳ пике пек,
Çавна илме
килтĕмĕр,
Илмесĕрех
каймăпăр.



Элиза ВАЛАНС (тел. 28-85-69) хатĕрленĕ.

# Пуканепе выляма пĕчĕк ача мар!



Виççĕмĕш класра вĕренекен Аня Мордова, Диана Кондратьева, Настя Федорова тăхтавсенче яланах пĕрле выляма кăмăллаççĕ. Акă паян шкул картишĕнчи сак çине ларса сăмах çăмхине сӳтме тытăнчĕç.

– Йывăççен хитре çулçисене шурă хут çине куçарас кăмăл пысăк. Курăр-ха, хĕрлĕ-сарă, симĕс çулçăсем мĕн тери илĕртӳллĕ! Çак илемлĕх кĕçех пĕтет. Çумăр çусанах тăкăнĕç вĕсем. Çавăнпа васкамалла манăн, паян киле çитсенех тĕрлĕ тĕслĕ кăранташ илсе пахчана тухса ларăп, – пĕлтерчĕ Аня хăй шухăшне тусĕсене.

– Сан пекех çут çантăлăк ытамĕнче пулма кăмăллатăп. Уйрăмах пулла çӳреме юрататăп. Шел, ку вăхăтра вăлтана пулă сахал çакланать. Ах, çуллахи вăхăтра мĕн чухлĕ тытмарăм пулĕ карассене! Вĕсене хамах тасатрăм, кайран аннепе çатмара ăшаларăмăр. Типĕтме те çакрăмăр, шӳрпе те пĕрре мар пĕçертĕмĕр. Пĕлетĕр-и, мĕн тери тутлă-ă-ă! Çуралнă кунпа пиччем питĕ чаплă парнепе савăнтарчĕ. Пысăк тав ăна! Мана ăнланнишĕн, – терĕ Диана Кондратьева йăлт та ялт сиккелесе.

– Чим-ха, пукане туянса пачĕ-и сана пиччӳ? Мĕн ятлине? Мана унпа пĕррехинче выляттарăн-и? Кусĕсем мĕн тĕслĕ, çӳçĕ вăрăм-и тата? – кăсăкланчĕ Настя ун çине шăтарасла пăхса.

– Э, çук! Эпĕ текех пĕчĕк мар пуканепе выляма. Хитре вăлта, чаплă йышшине парнелерĕ. Ĕнтĕ килес çул витри-витрипе пулă тытăп. Ун чухне кушаксемпе чăхчĕпе те час-час хăналăп пĕве кучченеçĕпе, – мăнаçланчĕ хĕр ача юлташĕсен умĕнче.

Пĕр хушă шăпланчĕç хайхискерсем. Унтан Настя:

– Пĕррехинче пире те илсе кайăн-и пĕве хĕррине? Эсĕ пуллине тытаканĕ пулăн, эпир вĕсене пустарса витрене ярăпăр. Мĕнле пек, килĕшмелле-и? – терĕ йăвашшăн.

– Шыв хĕррине хамăра виççĕн çеç кайма никам та ирĕк парас çук. Çавăнпа малтан пиччене канашламалла. Манăн шухăшпа, вăл пĕрре те хирĕç пулас çук. Унăн кăмăлĕ çав тери ырă, – терĕ хĕр ача.

Урок ларнине систерсе шăнкăрав янăрарĕ.

– Атьăр хăвăртрах класа! Пӳлĕме юлса кĕрес марччĕ. Вĕрентекен умĕнче аван мар ун пек, – терĕ Диана васкатса.

Висĕ тус класс еннелле хыпаланчĕ.

# Пĕрле пуçтарăнсан



Шкулта пултарулла ача нумай. Пĕрисем йывăçран тĕрлĕ япала ăсталама сатур. Акă халĕ вĕсем кайăксем валли сырăшсем ăсталама пуçăннă та. Юрă-ташăпа кăсăкланакансем куракана хăйсен пултарулăхĕпе савăнтарма та ĕлкĕрчĕç. Вĕренӳ отличникĕсем: Таня Николаевăпа Марина Яковлева, Гриша Ивановпа Ваня Николаев тата Кристина Филиппова та ахаль лармаççĕ. Вĕсем халех тĕрлĕ ăмăрту-конкурса хатĕрленме тытăннă.

Тăххăрмĕш класри Таня Николаевăпа Марина Яковлевăн пĕрпеклĕх чылай. Иккĕшĕ те пĕрремĕш класранпах «5» паллăпа çеç вĕренеççĕ. Пушă вăхăтра алла кĕнеке тытса тавра курăмне аталантараççĕ. Çавăнпа час-час вулавăша çӳреççĕ.

– Акăлчан чĕлхине юратнăранах куçарусă профессине алла илес килет. Ют çĕр-шыва çитсе курасси те тахçанхи ĕмĕт, – хăй шухăшне самантрах палăртрĕ Марина.

– Çыхма çав тери кăмăллатăп. Мĕн пĕчĕкренех ку ĕçпе кăсăкланатăп. Питĕ килĕшет. Каярах кофта тавраш çыхас шухăш та пур-ха. Хама валли çеç мар, парнелĕх те тăвасшăн, – хăпартланать Таня.

Çиччĕмĕш класра вĕренекен Ваня Николаев пирки те вĕрентекенсем ыррине çеç калаççĕ. Арçын ача уроксенче кирек епле кăткăс ыйтăва та туллин хуравлама пултарать. Нихăçан та çухалса каймасть. Лайăх вĕреннисĕр пуçне çав тери ĕçченскер вăл. Ашшĕ-амăшĕ пекех. Вĕсен пахчинче пĕр çум тупаймăн. Йăранĕсем тирпейлĕ.

– Атте-аннене пулăшасси – манăн тĕп тĕллев. Вĕсем пирĕншĕн тăрăшаççĕ те, мĕншĕн вĕсемпе пĕрле кăштăртатмалла мар? Пушă вăхăтра яланах пулла çӳретĕп. Манăн питĕ пысăк карпсем тытас килет, – хăй ĕмĕтне пĕлтерчĕ вăл.

Саккăрмĕшĕнчи Гриша Иванов та аслисене чунтан юратса хисеплет. Май килнĕ таран вĕсене пулăшнисĕр пуçне тĕрлĕ апат янтăлама ухута.

– Эпир çĕр улми лартса ӳстеретпĕр те унранах шаркку, яшка, кукăль-пӳремеч пĕçеретпĕр. Мĕн тери тутлă пулать тата! Хамăр çемьепе сĕтел хушшинче ларма юрататăп эпĕ. Кăмăллă-çке пурте пĕрле пуçтарăнсан, – тет Гриша хавхалануллăн.

Пиллĕкмĕш класри Кристина Филиппова – йышлă çемьерен.

– Аттепе аннен эпир пиллĕкĕн. Ирина аппана, Игорьпе Сергей пиччемсене тата Настя йăмăкăма çав тери юрататăп. Аслисем шкултан вĕренсе тухса кайнă ĕнтĕ. Эпир Настьăпа шкул сукмакне такăрлататпăр. Иксĕмĕр те «5» паллăсемпе кăна вĕренетпĕр. Малашне те килтисене савăнтарас тесе тăрăшăпăр, – тет Кристина.

# Йышлă çемье



Тăххăрмĕш класра ăс пухакан Инесса Алексеева та нумай ачаллă çемьерен.

– Туслă пурăнатпăр. Пĕр-пĕрне яланах пулăшатпăр, кирек хăш вăхăтра та, – мăнаçланчĕ Инесса.

Аппăшĕ Наина вун пĕрмĕшĕнче, шăллĕсем Романпа Родион çиччĕмĕшпе тăваттăмĕш класенче вĕренеççĕ. Йĕкĕреш йăмăкĕсем Агнессăпа Софья нумай пулмасть улттă тултарнă. Тăваттăри Ангелинăпа иккĕри Никон вара каç пуласса чăтăмсăррăн кĕтеççĕ. Ара, вăл вăхăтра пурте киле пуçтарăнаççĕ-çке.

– Эпир шкултан таврăнсан уйрăмах пĕчĕккисем хаваслă. Пирĕн хыççăн кушак çурисем пек çӳреççĕ те хайхискерсене епле юратмăн-ха? Вĕсемсĕр урок та тăваймăн. Юнашар пырса лараççĕ те вунвун ыйту параççĕ. Ручка-кăранташ илсе тетраде тем çыраççĕ, чĕрмелеççĕ, – сăмахларĕ Инесса кулкаласа.

Тăваттăмĕш класра ăс пухакан Родион та хăйсен çемйине юратнине пĕлтерчĕ.

– Эпĕ аннене те, аттене те питĕ юрататăп. Акă сăмахран, аттепе сарайĕнче е картишĕнче ĕçленисĕр пуçне пӳртре урай, савăт-сапа çума та ӳркенместĕп. Пирĕн килте ку санăн, ку манăн ĕç тесе уйăрни çук. Пĕр-пĕрне пулăшса тăратпăр, – çирĕплетет Родион.

Алексеевсем выльăх-чĕрлĕхне те картиш тулли усраççĕ. Ку ĕçре вĕсене ачисем пулăшсах тăраççĕ.

– Эпир сĕт те, какай та юрататпăр. Çавăнпа та пурте пĕрле кил-тĕрĕшре тăрмашатпăр. «Пĕрлĕхре – вăй», – тесе ватăсем ахальтен каламаççĕ. Хăш чухне каларăш кĕнекине алла илсе пăхса-вуласа ларатăп. Чăн та, мĕн тери хаклă сăмахсем шăрçаланнă унта! – тет Инесса.

Хĕр ача халех экзаменсене хатĕрленме пуçăннă. Тĕрлĕ литература вуласа кирлисене тетраде çырса пырать.

Вăрнар районĕ,
Асăмçырми шкулĕ.
**АВТОР сăн ӳкерчĕкĕсем.**

Луиза ВАСИЛЬЕВА (тел. 28-85-69) хатĕрленĕ.

# Вилор Чекмак



**Çамрăк патриотсем нимрен хăрамасăр тăшмана хирĕç çапăçнă тĕслĕх сахал мар. Вун пилĕк çулти Вилор Чекмак хăйĕн пурнăçне шеллемесĕр Севастопольти партизан отрядне çăлнă. Чĕре чирне тата ытла çамрăк пулнине пăхмасăрах вăл 1941 çулхи çурла уйăхĕнче партизансемпе вăрмана кайнă. Чӳк уйăхĕн 10-мĕшĕнче хуралта тăраканскер карательсем çывхарнине чи малтан асăрханă. Ракета ярса хамăрăннисене систернĕ, нумай йышлă фашиста хирĕç пĕчченех çапăçнă. Патронсем пĕтсе çитсен Вилор тăшмансем çывăха çитессе кĕтнĕ, хăй те пĕрле вилессе пĕлсех граната сирпĕтнĕ. Ăна Севастополь патĕнчи Дергачи ялĕнче Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçин ветеранĕсен çăви çинче пытарнă.**

## Тупа туни

Утă уйăхĕн 12-мĕшĕнче Крым тăрăхĕн комитечĕ фашистсем хупăрласа илсен хӳтĕленес тĕллевпе партизан отрячĕсем йĕркелеме йышăнчĕ. Пĕтĕм çурутрава пилĕк пая пайларĕç. Пиллĕкмĕшĕ (Севастополь пайĕ) Бахчисарай-Байдары-Севастополь виç кĕтеслĕхе кĕрет.

Севастопольте партизан отрячĕ йĕркеленме тытăнчĕ. Хула комитечĕ Тамара Алешинăна комсомолецсенчен чи лайăххисене суйласа илме хушрĕ. Вилор Алешина патне килчĕ. Кабинетран пурте тухса пĕтессе кĕтсен арçын ача сăмах пуçарчĕ:

– Мана та çырса хурăр.

Тамара тӳрех ăнланчĕ – мĕн пирки сăмах пынине тĕшмĕртеймен пек курăннинчен усси çук.

– Атя ним пытармасăр калаçар, Вилор. Отряда çул çитнисене кăна йышăнма юрать. Санăн вара унччен чылай кĕтмелле...

Вилор тӳсеймерĕ.

– Мĕне кирлĕ-ха кунта паспорт? Эпĕ вун-вун çухрăм пĕр канмасăр утса тухаятăп! Константиновск батарейине тата унтан каялла пĕр чарăнмасăр ишеетĕп! Эпĕ...

– Çитет! Мухтансах кайрăн.

– Пур пĕрех партизан пулăп.

– Виля, çара каясси – вăрçă çинчен вуласси мар. Сана тытсан вара? Асаплантарма пуçласан? Çакна аслисем те пурте чăтаймаççĕ.

– Манăн атте те вăрçăра партизан пулнă.

Тамара хаш сывларĕ.

– Вăл санран нумай çул аслăрах вĕт-ха. Ун чухне урăх вăрçă пулнă.

Пĕрремĕш калаçу çапла вĕçленчĕ. Анчах Вилор парăнмарĕ. Вăл райком партийĕн секретарĕ патне те çитрĕ. Шанăç юлман вăхăтра Чекмак юлашки сăлтавне пĕлтерчĕ:

– Эпĕ Осоавиахим шкулĕнчен вĕренсе тухнă. Хушсене пурнăçлама вĕрентнĕ овчарка пур манăн, вăл вăрманта питĕ кирлĕ пулĕ!

Секретарь аллисемпе сулкалашса йăл кулчĕ.

– Ӳкĕте кĕртрĕн, шаллăм! Овчарка – питĕ лайăх çирĕплетӳ. Тамара, Чекмак юлташа партизансен Севастопольти отрядне çырса хур.

Виля темĕнле шухăш тытнине Любовь Георгиевна чĕрипе туйрĕ. Çакăн пирки ывăлĕпе асăрханса калаçма тытăнсан лешĕ сăмаха пăрса çеç ячĕ. Амăшĕ тӳсеймерĕ вара – Алешина патне кайрĕ.

– Эпĕ – Вилор Чекмак амăшĕ. Сирĕнтен пулăшу ыйтатăп. Эсир те часах амăшĕ пулатăр. Ăнланăр-ха мана...

Любовь Георгиевнăна Тамара пĕрремĕш хут курчĕ. Унăн тĕттĕмрех питне, илемлĕ пуçтарнă çӳçне кăсăкланса сăнарĕ... Вăрăм пӳрнисем чĕтрекен чĕр куççийĕсене лăплантарма хăтланаççĕ.

– Виличка ача кăна-ха. Ну мĕнле партизан пултăр унран?!

Алешина алăк патне пычĕ.

– Чекмака халех ман пата чĕнĕр!

Вилор салтак евĕр утса кĕчĕ. Амăшне курсан сăнĕ тĕксĕмленчĕ.

– Виля, – терĕ Алешина лăпкăн. – Эпĕ сана списока кĕртеймерĕм-ха...

Арçын ачан тинĕс пек кăвак куçĕсенче çулăм хыпса илчĕ, пит çăмартисем шурса кайрĕç.

– Анне, аннеçĕм! Вăрçă хыççăн мĕнле пурăнăп-ха эпĕ? Юлташсене куçран епле тинкерĕп? Юра мучи ман çинчен мĕн шухăшлĕ? Юрий Константинович вара? Аттепе мĕнле тĕл пулăп?

Вилор питĕ шăппăн каларĕ, анчах амăшне унăн сасси пĕтĕм пӳлĕме тултарнăн туйăнчĕ. «Ашшĕ пекех-çке вăл, – шухăшларĕ Любовь Георгиевна. – Çак винтовкăпа, флот пиçиххийĕпе...» 1919 çулта шăпах çакнашкал курнăччĕ вăл Петр Чекмака.

Любовь Георгиевна пуçне çĕклерĕ те ывăлĕпе иккĕшĕн куçĕсем тĕл пулчĕç.

– Ни юлташусем, ни Юрий Юрьевич, ни Зиновьев умĕнче нихăçан та пит хĕретме тивмĕ санăн. Тăшманпа çапăç, аçу пек!

Çакăнтан чылай инçетре, Мускав çывăхĕнче, халĕ Петр Андреевич Чекмак тăшманпа çапăçать.

Тамара Алешина çĕкленчĕ. Кобуraран пĕчĕк револьвер кăларчĕ те алă тупанĕ çине хучĕ. Вилор пĕтĕмпех ăнланчĕ. Ку – татăклă йышăну. Отряда кĕрекен кашни комсомолец çакăнта тупа тăвать. Арçын ача аллине револьвер çине хучĕ.

– Çапăçура хăраса ӳкмĕп тесе, сывлăш çитми пуличчене тăшманпа кĕрешме сăмах парса тупа ту...

– Тупа тăватăп!

– Гитлеровецсен аллине çакланса, вĕсем сана темĕнле асаплантарсан та юлташусене сутмăн, партизан отрячĕн вăрттăнлăхне усмăн...

– Тупа тăватăп!

## Севастопольти партизансен пайĕ

Партизан отрячĕн штабĕ тата хатĕрленӳ бази Алсу хулинче вырнаçнă. Хăйне ăçта илсе килнине ăнлансан Вилор савăнчĕ. Кунта Хура юхан шыв хутлăхĕнче вăл кашни сукмака, сăртăн кашни катламне, кашни хăвăлне пĕлет. Шăпах Алсу хулине суйласа илни ăнăçу пекех-çке!

Виля отряда юлашкисемпе пĕрле çитрĕ. Ăна Муса Джигит кĕтсе илчĕ те тӳрех Красников командир патне илсе кайрĕ. Владимир Васильевич, вăрçăччен хула çумĕнчи пĕрлештернĕ хуçалăх директорĕ пулнăскер, тин çеç килсе çитнĕскере сăнарĕ. Ăна ырласа пуçне сулчĕ. Вилор, чăнах та, партизан пекех курăнать: атăсем, сарлака пиçиххипе туртса лартнă бушлат (салтаксен ăшă тумĕ), кăкăр умĕнче – бинокль.

– Пăшалтан пеме пĕлетĕн-и? – ыйтрĕ Красников. – Эх, чăнах та, куратăп – «Ворошилов пăшалçи». Миçемĕш степень? Иккĕмĕш. Лайăх. Тата мĕнпе аппаланнă-ха эсĕ?

– Шкулта ӳкереттĕм. Юрлама пултаратăп!

Командир куçĕсем хĕмленчĕç.

– Ку лайăх-ха. Анчах эпĕ ун çинчен ыйтмастăп... Спортăн хăш тĕсĕпе те пулин туслă-и? Кĕрешу? Бокс?

– Эпĕ лайăх ишетĕп. Юлташсемпе флот станцине çӳреттĕмĕр.

Муса Джигит сăмах хушрĕ:

– Виля пĕччен килмен. Унăн овчарка пур. Танксене пĕтерекен пек, çыхăнуçă пек, санитар пек ĕçleме пултарать.

– Япăх мар. Ăçта хăвартăн-ха ăна?

– Алăк патĕнче.

Красников çĕр пӳртрен тухса пăхрĕ те çĕкленӳллĕн пуçне çаврăкаларĕ.

– Вăт ку япала! Санăн пулăшуçу пире кирлĕ пулĕ. Апла пĕлтер, Муса, иккĕшне те йышăнччăр.

Каччăсем уçланкăна тухрĕç. Ральф Вилорăн сулахай ури çумĕнче пычĕ. Утнă вăхăтра Джигит партизан отрячĕ çинчен каласа пама ĕлкĕрчĕ. Отрядра ик çĕре яхăн салтак. Вĕсенчен утмăлăшĕ – çамрăксем, комсомолецсем. Ыттисем вара – Граждан вăрçинче çапăçса курнисем. Ĕнерхи шкул ачисенчен пуçтарăннă ушкăн та пур. Отряда кĕресшĕн çунакан ачасемпе мĕн тумалли пирки пуç ватнă чухне чи вăйлисене, чи чăтăмлисене те çаврăнăçуллисене çеç илме шухăшларĕç.

– Акă çитрĕмĕр те. Ку – пирĕн ушкăн чарăнмалли вырăн.

– Ăçта?

Муса чеен куç хĕссе пăхрĕ.

– Кунта!

Ыттисене тĕлĕнтернипе кăмăллăскер тюбетейкине хыврĕ те курăк çине пăрахрĕ. «Çитрĕмĕр, вырнаçăр», – тени пулчĕ ку.

Виля Ральф çине пăхса илчĕ. Йыттăн сăмса шăтăкĕсем туртăнкаларĕç. Аха, çынсем пуррине туять вăл. Анчах ăçта-ши вĕсем?

Муса икĕ пӳрнине çăвара чикрĕ те шăхăрчĕ. Тĕмсемпе йывăççем хыçĕнчен салтаксем тухрĕç. Вилор урисем патĕнчех симĕс çерем çĕкленчĕ. Çĕр айĕнчен сухаллă та мăнаçлă ар çын тухрĕ, пуçĕ çинче – куракла тирĕк.

– Федор пиччĕ! Ну ку... çĕр чĕтревĕ!

Вилор умĕнче Алсури колхоз пахчин хуралçи тăрать, вăл ачасене йывăç винтовкипе хăрататчĕ.

Пĕр-пĕрне палласа илсе сăмахланă хыççăн пĕтĕм ушкăн юхан шывпа çӳлелле хăпарчĕ. Пысăках мар чул патĕнче чарăнсан Виля Федоренкăран çĕлĕкне ыйтрĕ те йытта шăршлама пачĕ.

– Ральф, шыра!

**(Вĕçĕ çитес номерте.)**

*Михаил ЛЕЗИНСКИЙĕН «Вилор, пурăн!» повеçĕнчен.*



Тантăш 7
40 №, 2014, юпа, 2

ЧĔР ЧУНСЕН ТĔНЧИ

# ТАЙГАРА МĔН ПУРĂНАТЬ?

***Çĕр-шывăн хĕвел анăç енĕнчен пуçласа хĕвел тухăçа çити хырчăрăш вăрманĕ – тайга – сарăлса выртать. Çу кунĕсем унта сивĕрех те кĕске, хĕлле вара вăраха тăсăлать, юр нумай çăвать. Тайгара мăкпа витĕннĕ торф шурлăхĕсем пысăк лаптăк йышăнаççĕ. Вĕсенче вара тĕрлĕ çырла нумай çитĕнет. Унта яланах кайăк-кĕшĕкпе чĕр чунсене курма пулать. Çырласем пиçсе çитнĕ вăхăтра шурă хир чăххисене, карăксене тата пăчăрсене тĕл пулма май пур. Хĕл кунĕсем çитсен кайăксенчен нумайăшĕ ăшă енне вĕçет, хăш-пĕр чĕр чун тайган кăнтăр енне куçать, вăрăм ыйха путаканнисем те пур.Теприсем вара кирек хăçан та унтах.***

## Пăрăнтăк



Тайгара пурăнакан чĕр чунсенчен пĕрин, пăрăнтăкăн, чи юратнă апачĕ – кедр йĕкелĕ. Ăна вăл саппас та хатĕрлесе хурать.

Пурăнмалли вырăнне пушă йывăç хăвăлĕсенче, йывăç тымарĕ патĕнчи пысăках мар шăтăксенче йĕркелет. Çанталăк сивĕте пуçласанах çичĕ уйăха тăсăлакан хĕл ыйхине путать. Çуркунне вара хĕвел ăшшине туйсанах вăранать. Çулла хатĕрлесе хăварнă йĕкелсемпе тăранать. Çу варринерех пăрăнтăк çурисем çураласçĕ. Хăвăрт çитĕнекенскерсем пĕр уйăхранах амăшĕнчен уйрăлса хăйсем тĕллĕн пурăнма тытăнаççĕ.

## Çӳлевĕç



Хыр-чăрăшлă вăрманта тискер чĕр чун нумай. Вĕсенчен пĕри çавăнăçуллă çӳлевĕç. Сарă-сăрăрах çăмне пула йывăçсем хушшинче ăна асăрхамасса та пултаратăн. Сарлака, çемçе урисем утнă чухне пĕр сасă та тумаççĕ. Юр çинче çӳренĕ чухне те путма памаççĕ. Йăпшăнса, шăппăн йĕрлет вăл пĕр-пĕр чĕр чуна.

Çăмĕ ăшă та çăра пулнăран вăл юр çине выртсах çывăрма пултарать. Шăнмасть. Тин çеç çуралнă çӳлевĕçсем килти кушак çурисене аса илтереççĕ. Хăлхи вĕçĕнчи пĕчĕк «кистĕк» çăмĕпе тата кĕскерех хӳрисемпе çеç уйрăлса тăраççĕ вĕсенчен.

## Пĕркĕт (беркут)



Пĕркĕт – вăйлă та пысăк тискер кайăк. Авăнчăк сăмсипе, çивĕч куçĕсемпе, сарлака çуначĕсемпе тата çирĕп чĕрнеллĕ кĕрнеклĕ урисемпе палăрса тăрать вăл. Темиçе çĕр метр çӳллĕшĕнче вĕçнĕ чух та çĕр çинче чупакан шăшие асăрхама пултарать. Ытларах вăл пĕчĕк чĕр чунсене тытать. Мулкача е тыркаса курсан аялалла çиçĕм пек хăвăрт вирхĕнет те урисене малалла тăсса чĕр чуна чĕрнисемпе çаклатать. Шывра ишекен кайăккĕшĕке те çапла майпа йăтса каять.

Пĕркĕтĕн йăви хăй пекех пысăк. Ăна вăл çӳллĕ вырăна, нимĕн çитеймен çĕре çавăрать. Чул хысакĕ е пĕр-пĕр хăрнă çӳллĕ йывăç çинче курма пулать вĕсене.

## Ӳхĕ



«Уу-уху-уу...» – илтĕнет каç пулсан вăрман çийĕн. Ку ӳхĕ ухутана тухнине пĕлтерет. Пĕр пĕчĕк шăши те, кайăк та тарса пытанаймĕ унран. Çивĕч хăлхипе куçĕ пурне те илтеççĕ, кураççĕ, сисеççĕ. Каçсерен вĕçекенскер кăнтăрла йывăç турачĕсем хушшинче пытанса ларать. Тĕттĕм пуласса кĕтет.

Хĕлле, шартлама сивĕсенче çимешкĕн, йывăç хăвăлне е юр ăшне саппас апат пытарса хатĕрлет.

Çанталăк çуркунне енне сулăнсан чĕпписем тухаççĕ. Ашшĕ-амăшĕ вĕсене хăйсем тĕллĕн вĕçме пуçласан та тăрантарма пăрахмасть.

## Росомаха



Çак чĕр чун сăсар «тăванĕ» шутланать. Хăй вара пĕчĕк те çăмламас упана аса илтерет. Çирĕм килограма яхăн таяканскер вăйлă та çавăнăçуллă, нимрен те хăрамасть. Пысăк чĕр чун виллисемпе тăранса пурăнать. Вĕсен шăршине вăл хулăн юрпа витĕннĕ пулсан та туять.

Росомаха çынсем лартнă капкăна лекнĕ чĕр чунсене вăрласа та апатланать. Вăл питĕ асăрхануллă. Хăй капкăна лексен вара мĕнле те пулсан пур пĕрех хăтăлса тарать. Хĕлле вилесемпе тăранать пулсан, çулла шăшисемпе, кайăксемпе, вĕсен çăмартисемпе, çырлапа тата майăрпа апатланать. Росомаха çурисем икĕ çулта пĕрре çеç çураласçĕ. Вĕсене амăшĕн çулталăк тăршшĕпех пăхма тивет.

КĂСĂКЛĂ

# «Иккĕмĕш çăкăр»

Çак çимĕçе эпир пĕçерсе, ăшаласа, нимĕрлесе те çиетпĕр. Унран кукăль тавраш та янтăлатпăр. Мĕн пирки сăмах пынине ăнлантăр пулĕ тетĕп. Тĕрĕс: вăл – çĕр улми. «Иккĕмĕш çăкăр» тесе ахальтен каламан ун пирки. Чăнах та, апатланма ларсан кашнинче тенĕ пекех çак çимĕç сĕтел çинче.

Историпе биологи урокĕсенче тимлĕн итлекенсем çĕр улмие пирĕн çĕр-шыва хăçан тата ăçтан илсе килнине пĕлесçех ĕнтĕ. Унăн тăван çĕрĕ – Америка. Раççейре ун пирки пуçласа пĕрремĕш Петĕр тăрăшнипе пĕлнĕ. Иккĕмĕш Кĕтерне патша вăхăтĕнче вара çак çимĕç çĕр-шывĕпе тенĕ пекех çитĕнме пуçланă. Анчах халăх чикĕ леш енчен кӳнĕскере юратсах кайман. Ăна «шуйттан пан улмийĕ» текенсем те тупăннă. Вăл наркăмăшлă тесе шухăшлакан та пулнă.

Николай Павлович император халăха çĕр улмие хистесех «хăнăхтарма» тăрăшнă. Çакăншăн вара хресченсем чылай пăлхав – «çĕр улми бунчĕ» – çĕкленĕ.

Цивилизаци аталанса пыракан Европăра та ку çимĕçе кăмăлламан. Сăмахран, Париж тухтăрĕсем вăл этемшĕн сиенлĕ, тĕрлĕ чире яма пултарать тенĕ. Франци çĕр улмипе «туслашма» Антуан Огюст Пармантье химик-фармацевт пулăшнă. Вăл акă мĕн шухăшласа кăларнă. Çĕр улми лартнă лаптăксене картасемпе тытнă, хурал тăратнă. Яланах çĕннине пĕлме тăрăшакан, пуринпе те кăсăкланакан французсем вара чăтайман, çимĕçе вăрла-вăрла хăйсен пахчисене сĕтĕрнĕ. Тинех кашнийĕн анкартийĕнче çĕр улми çитĕнме пуçланă вара. Анчах ăна вĕсем апат валли ӳстермен.



Чечекĕшĕн çеç. Çапла. Çĕр улми çеçкипе капăрланса балсене çӳренĕ вĕсем. XVI Людовик та çак çимĕç чечекĕпе кăкăр кĕсйине бутоньерка пек илемлетсе ташă каçĕсене пыни паллă.

1793 çулта çеç, французсене выçлăхран çĕр улми сыхласа хăварсан, ăна чăннипех хаклама пуçлаççĕ вĕсем. Çакăн хыççăн Пармантьене халалласа тӳрех икĕ палăк лартаççĕ.

XVIII-XIX ĕмĕрсен вĕçĕнче вара çĕр улми кашни халăх рационĕнче тенĕ пекех тĕп вырăн йышăнма пуçлать.

Сăмах май, Александр Сергеевич Пушкинăн та юратнă çимĕçĕ чăмăрла пĕçернĕ тата ăшаланă çĕр улми пулнă тет. Вăл хăй те ăна хатĕрлеме çĕнĕ меслет шухăшласа кăларнă. Пĕррехинче поэт çĕрле çеç Михайловскине таврăннă. Каçа юлнипе хырăмĕ те выçнă унăн. Анчах Арина Родионовнăна (Пушкина пăхаканĕ) ыйхăран вăратас темест. Сивĕннĕ, чăмăрла пĕçернĕ çĕр улмие тупать те çатмара çупа ăшаласа çиет. Ку апат питех те килĕшсе каять ăна. Юлташĕ-пĕлĕшĕсене те унпа хăналать вăл. Лешсем вара çимĕçе «картофель а ля Пушкин» тесе калаççĕ.

**Интереслĕ фактсем:**

Çĕр улмин 80 процентĕ шывран тăрать.

Çак çимĕç А витаминпа пуян.

Тĕнчере темиçе çĕр улми музейĕ пур.

Вăл помидорăн аякри «тăванĕ» шутланать.

Чи пысăк çĕр улми 8 килограмм тайнă. Çакна Гиннес рекорчĕсен кĕнекинче çырнă.

Çĕр улмин икĕ тĕсне пĕçернĕ хыççăн кăвак тĕс çапать.

Çак пахча çимĕçĕн пахалăхне хакланине кăтартма темиçе çĕр-шывра палăксем те лартнă.

# Асамлă сăмах

Валентина ОСЕЕВА



Сак çинче канлĕн ларакан шур сухаллă мучи çумне Павлик пырса тăчĕ.

– Куçăр-ха, – терĕ вăл кăнттамрах.

Ватă айккинерех шурĕ те çиллес сăнлă арçын ачана сăнарĕ. Лешĕ сак çине вырнаçрĕ.

– Мĕн пулнă сана, ачам? – ыйтрĕ мучи.

– Темĕн пулсан та эсир нимĕн те улăштараймăр, – хыттăн хуравларĕ Митя.

– Епле-ха апла? Эсĕ кунта киличчен ахăртнех такампа вăрçăннă, макăрнă. Çавăнпа питӳ те хĕрелнĕ, сăну та çиллес.

– Çапла пулмасăр! Кĕçех килтен те тухса тарăп-ха! – тарăхса калаçрĕ арçын ача.

– Мĕншĕн?

– Лена аппашăнах çапла тăвăп! Вăл мана хăйĕн сăррисенчен пĕрне те парасшăн мар! Темиçе те ыйтрăм! Паян чутах патак çитереттĕмччĕ-ха хыт кукара! Ы-ы-ых, – чышкисене чăмăртарĕ Павлик.

– Сăрăсемшĕнех килтен тухса каймалла мар ĕнтĕ, – терĕ мучи лăпкăн.

– Тепĕр сăлтав та пур-ха. Асанне яшка валли хатĕрленĕ кишĕре илнĕшĕнех тĕпелтен йĕпе çĕтĕкпе хăваларĕ! Пĕр пĕчĕк кишĕршĕнех çапла хăтланчĕ! – Павлик кулянннипе ассăн сывларĕ.

– Ку темех мар-ха. Пĕри вăрçсан тепри шеллесе пуçран шăлать.

– Мана никам та шеллемест-çке! Пичче кимĕпе ярăнма çӳрет. Мана вара пĕрре те хăйĕнпе илмест. Эпĕ ăна: «Хăвăнпа мана та ил-ха, пур пĕрех санран хăпмастăп! Кимме кĕрсе ларатăп е кĕсменĕсене пытарса хуратăп!» – тетĕп. Вăл пур хăлхине те чикмест.

Павлик чышкипе сак хăмине кĕрĕслеттерчĕ. Тек нимĕн те шарламарĕ.

– Пиччӳ вара мĕншĕн сана пĕрле илмест?

– Пĕлместĕп. Мĕншĕн çапла ыйтатăр?

Мучи сухалне сăтăркаласа илчĕ те:

– Эпĕ сана пулăшасшăн. Тĕнчере пĕр асамлă сăмах пур...

Павлик тĕлĕннипе ним калама аптăрарĕ.

– Ăна хăв калаçакан çын куçĕнчен пăхса шăппăн каламалла. Çакна ас ту.

– Мĕнле сăмах вăл?

Мучи арçын ачан хăлхинчен темĕн пăшăлтатрĕ.

– Ку – асамлă сăмах. Ăна епле каламаллине манса ан кай, – асăрхаттарчĕ вăл тӳрленсе ларнă май.

– Юрĕ, – терĕ арçын ача куларах. – Халех унăн асамлăхне тĕрĕслетĕп.

Вăл сак çинчен сиксе анчĕ те килнелле вирхĕнчĕ.

Аппăшĕ сĕтел хушшинче темĕн ӳкерет. Сăррисем те кунтах – кăвакки, симĕсси, хĕрли... Павлика асăрхасанах вăл вĕсене пĕр çĕре пухрĕ, аллипе хупларĕ. «Эх, улталарĕ мана мучи! Аппан кăмăлне нимĕнле асамлă сăмах та çемçетес çук!» – шухăшларĕ Павлик.

Вăл майĕпен сĕтел патне çывхарчĕ, аппăшне кĕпе çаннинчен туртрĕ. Вара куçĕнчен тинкерсе:

– Аппа, пĕр сăрруна пар-ха мана...тархасшăн... – терĕ шăппăн.

Лена шăллĕ çине тĕлĕнсе чăр! пăхрĕ. Сăррисене аллинчен вĕçертрĕ.

– Мĕн тĕсли кирлĕ? – йăвашшăнрах ыйтрĕ вăл.

– Кăвакки, – терĕ Павлик.

Мĕн ыйтнине алла илсен вăл хăй пӳлĕмне кĕчĕ. Тӳрех каялла таврăнчĕ те сăррине аппăшне тыттарчĕ. Тĕрĕссипе, халĕ вăл Павлике кирлĕ те мар-ха. Арçын ача асамлă сăмах çинчен çеç шухăшларĕ. «Асанне патне каяс-ха. Çак сăмаха унпа калаçса тĕрĕслесе пăхас», – хăйпе хăй мăкăртатрĕ вăл.

Тĕпел алăкне уçрĕ те пӳлĕме хуллен кĕчĕ. Асламăшĕ пиçсе çитнĕ кукăльсене кăмакаран кăларать иккен. Павлик ун патне чупса пычĕ те:

– Асанне, пĕр кукăль пар-ха... тархасшăн... – терĕ шăппăн.

Ватă çын самантрах тӳрленчĕ. Асамлă сăмах пулăшнипе питĕнчи пĕркеленчĕкĕсем те якалнăн туйăнчĕç Павлика.

– И-и-и мăнукăм, акă тыт вĕрискерне. Хырăму тахçанах выçрĕ пуль, – терĕ вăл кăмăллăн арçын ачана çупăрланă май.

Павлик савăннипе сиккелесе те илчĕ. Асламăшне хыттăн ыталарĕ те урама тухрĕ.

«Вăт мучи! Чăн-чăн асамçă!» – хĕпĕртесе шухăшларĕ арçын ача сак çинчи шур сухала аса илсе.

Пурте сĕтел хушшине апатланма пухăнсан Павлик пиччĕшĕн кашни сăмахне тимлĕн итлерĕ. Лешĕ кимĕпе ярăнма каясси çинчен пĕлтерсенех каллех хăйне илмесрен пăшăрханчĕ. Унпа юнашар ларакан пиччĕшĕн хулпуççийĕ çине аллине хучĕ те:

– Мана та хăвăнпа ил-ха, тархасшăн, – терĕ.

Пурте тăруках шăпланчĕç. Пиччĕшĕ кулса илчĕ.

– Ил ĕнтĕ Павлика, – кĕтмен çĕртен шăллĕ майлă калаçрĕ аппăшĕ.

– Паллах, ярăнтарса кил пĕрех хут, – терĕ асламăшĕ те.

– Тархасшăн, пичче, – терĕ Павлик чăтăмсăррăн.

Асли хаваслăн кулкаларĕ те унăн ĕмĕтне пурнăçлама килĕшрĕ.

– Атя, пустарăн! Пĕчĕк çул çӳревçĕ, – кăмăллăн калаçрĕ вăл сĕтел хушшинчен тухнă май.

«Пулăшрĕ! Каллех пулăшрĕ!» – шухăшларĕ Павлик савăнăçлăн.

Вăл пӳртрен вирхĕнсе тухрĕ те паçăрхи тĕле чупрĕ. Мучие тав тăвас терĕ. Анчах сак çинче никам та çуккине курсан салхуллăн каялла утрĕ.

Нина ПАВЛОВА

# Кушак çурисем

Урăннă тет виçĕ кушак çури: Çулăмпи, Хăрăмпи, Юр пĕрчи. Пĕрремĕшĕ хĕрлĕсарă тĕслĕ, çулăм пекех. Тепри хăрăм евĕр хуп-хура. Виççĕмĕшĕ вара чăн-чăн юр пĕрчи пек чăлт шурă. Вĕсем хăюллă та туслă пулнă, пĕрле вылянă. Хăвăрт чупма, çӳллĕ сикме пĕлнĕ. Йывăç çине хăпарма çеç вĕренеймен-ха хальлĕхе. Буян йытăсăр пуçне нимĕнрен те хăраман кушак çурисем. Лешĕ, кӳршĕсен кил картишĕнче пурăнаканскер, час-часах вĕсен карти патне пырса хаяррăн вĕрнĕ, йывăç хăмана чĕрнисемпе чĕрмеленĕ. Виçĕ тус Буян вĕсен кил картишне кĕрейменнине ăнланнă пулин те картаран аяккарах пăраннă.

Пĕррехинче хуçи таçта тухса кайнă. Хапхине вара уçă хăварнă. Кушак çурисем çемçе курăк çинче хĕвел ăшшипе киленсе выртнă. Унччен те пулман, кил картине Буян кĕрсе тăнă. Пĕчĕкскерсем ăна курсан çухалсах кайнă. Мĕн тумаллла? Ăçта тармалла? Пӳрте кĕмелли алăка питĕрнĕ, чӳрече янахĕ ытла çӳллĕ вырнаçнă – сиксе ларма çук, карта инçе – чупса та çитеймĕн, харсăр анчăк ярса тытĕ.



Тавçăруллă туссем нумай шухăшласа тăман. Акă мĕн тунă. Юр пĕрчи шурă сăрăпа сăрланă пӳрт алăкĕ патне пырса тăнă та курăнми пекех пулнă. Çулăмпи сарă-хĕрлĕ кирпĕч стена çумне тайăннă – асăрхаймăн та. Хăрăмпи вара крыльца умĕнче тăракан кăмрăк тултарнă витрене чăмнă. Епле тинкерсен те тупаймăн халĕ ăна!

Йытă çаплах кил карти варринче тăрать-ха. Нимĕн ăнланаймасăр пуçне унталла та кунталла çавăрать. Ара, халĕ çеç кунтаччĕ-çке кушак çурисем!

Нумай вăхăт иртмерĕ, хуçи те килсе çитрĕ. Ют йытта хăваласа кăларчĕ. Виçĕ çăмламаса вара тутлă кăлпассипе сăйларĕ.

Нина ЦАРЫГИНА (тел. 56-11-80) хатĕрленĕ.

# Кахалпи, Куштанпи, Наянпи

Луиза ВАСИЛЬЕВА калавĕсем



Çынсенни пек маттур кушак усрас килет манăн. Мăр-мăр тенин кашни кун шăши тытмалла: ирхине, кăнтăрла, каçхине.

Пирĕн килти виçĕ услап кунĕпе кăмака çинче хуп турттараççĕ. Ăшă сĕт лĕрккеççĕ те каллех хăйсен вырăнне хăпарса выртаççĕ. Пурнăç лайăх вĕсемшĕн. Акă халĕ хĕвел ăшшипе киленсе урайĕнче выртаççĕ.

Пĕр кунхине диван çине вырнаçса кĕнеке вулама тытăнтăм. Сасартăк сĕтел çинчен хама пăхса ларакан шăшие курах кайрăм. Шар-и-и! çухăрнăран пĕчĕкскер кушаксем урлă чупса каçса кăмака хыçне кĕрсе пытанчĕ. Мăр-мăрсем йăшăл та тумарĕç вĕт. Какай шăршине сисмерĕç-ши вара?

Виççĕшне те, хуп турттараканскерсене, пĕчĕк мечĕкпе петĕм. Тинех куçĕсене уçса çăвар тулли анасларĕç. Кахалпи, Наянпи, Куштанпи... Хăйсене тыткаланине кура çакнашкал ятсем шыраса тупрăм. Пĕрне Хăрăмпи тесе чĕнесшĕнччĕ те, пулмарĕ. Кутăн хăй. Çитменнине каланине хăлхине те чикесшĕн мар.

Пĕррехинче ăна сĕтел çинче хуçаланнине куртăм. Хаçатпа хӳтертĕм. Куçне хупса ним пулман пекех ларчĕ. Пушшех тарăхнипе тепре хăлаçлантăм. Чалт! çеç сиксе тарчĕ хăй вырăнĕнчен. Ун валли ят та тупăнчĕ – Куштанпи.

Калатăп-çке, çынсен кушакĕсене пăхса ытармалла мар. Ĕçлĕхлĕ пулин те пĕчĕк ачасемпе выляма вăхăт тупаççĕ. Пирĕн вара...

Пĕр кунхине аннепе пахча вĕçĕнчи нӳхрепе кайса пăхма шухăшларăмăр. Кушаксем те пирĕнпе пĕрлех пычĕç. Тĕлĕнсе каймалла! Маттурланса кайрĕç ахăртнех. Курăр-ха, епле кăмăллăн мăрăлтатаççĕ.

– Сĕт памарăм-ха паян. Авă çиесшĕн малта кастарса пыраççĕ. Ара, шыв витрине виçĕ шăши кĕрсе ӳкнĕ. Нивушлĕ çавсене асăрхаман кахалсем? Тупата, пурне те миххе ярса вăрмана кайса яратăп, – мăкăртатрĕ анне те.

Нӳхрепе анса сумкăсене кишĕр, хĕрлĕ кăшман тултартăмăр та килелле савăнăçлă кăмăлпа уттартăмăр.

Тăваттăмĕш кун ĕнтĕ мăр-мăрсем киле таврăнмарĕç. Лайăх-ха. Таçта ырă хуçа тĕлне пулчĕç-ши? Тем пекехчĕ. Ара, ялан сăтăр тума юратаççĕ-çке. Пĕр самант пирки аса илтĕм-ха.

Çанталăк шăнтсан килтисем икĕ сысна пусрĕç. Нăрик-нăрикисене тирпейлесе çенĕке çакса хучĕç. Кашни кун анне какай яшкипе савăнтаракан пулчĕ. Кахалпи, Куштанпи, Наянпи те куллен пĕр татăк аш çиме тытăнчĕç.

Пĕр ирхине пурте шкула кайсан çенĕке тухрăм. Чутах чĕлхесĕр пулса лараттăм. Сысна çинче – пирĕн мăр-мăрсем! Шăннăскере асапллăн кăшлаççĕ. Нихăçан та апат çимен пек хăтланаççĕ вĕт, путсĕрсем!

– Прис! – терĕм тарăхса.

Вырăнтан та хускалмарĕç. Шăпăрпа хăваласан çеç кăмăлсăррăн тарчĕç. Ăнт, ан тупăнччăрах халĕ мăр-мăрсем. Урăх маттурккa кушак тупса килĕп.

Эрне иртсен аннепе нӳхрепе купăста илме васкарăмăр. Алăка уçрăмăр çеç – сикрĕç тухрĕç кушаксем! Тупата, чĕресĕр юлаттăмăр. Хайхисене асăрхамасăр хупса хăварнă иккен.

Тунсăхланă пулас, макăрма тытăнчĕç. Выçăскерсем çимелли ыйтаççĕ. Хăйсем начарланнă. Çавăнта шăши тытса çиме ӳркеннĕ ĕнтĕ кахалсем. Анне шеллесе çапах киле илсе кайрĕ. Малтанах пĕр чашăк сĕт ярса пачĕ. Унтан шаркупа хăналарĕ. Хырăмĕсем хăмпă евĕр хăпарса кайрĕç. Кайран аран уткаласа виççĕшĕ те диван çине хăпарса выртрĕç.

Темиçе кунтан хитреленчĕç. Тулĕк урамра уçăлса çӳрес тесе пĕрре те шухăшламаççĕ. Кунĕпе хуп турттараççĕ.

Ытлари кун, чăтаймарăм, пурне те картише кăларса ывăтрăм. Вара вĕсем мĕн хăтланнине кантăкран сăнама тытăнтăм. Акă карта çинчи çерçие хăвалама тытăнчĕç. Пĕчĕкскер, вĕсене вăрçтарас тесе-ши, юриех аялрах вĕçме тытăнчĕ. Кахалпи, Наянпи, Куштанпи ниçта кайса кĕреймеççĕ вĕт! Тĕпĕртетеççĕ кăна. Салакайăк мăрмăрсене çапла чылайччен вăрçтарчĕ. Унтан аяккалла вĕçсе кайрĕ те куçран çухалчĕ.

Тусăмсем кăмăлсăррăн картлашка çине пырса ларчĕç. Пичĕсене çума тытăнчĕç.

– Пурте сирĕн пек мăран мар çав, кайăксем пек маттур пулсан çеç сире хисеплеме тытăнăп, – терĕм сасăпах.

# Килти выльăх-чĕрлĕхе пăхăп хамах хальлĕхе

Анне аттене хачă хăйрама хушрĕ. Ахăртнех манăн вăрăм чĕрнене касасшăн вĕсем. Асăрхамасăр ăнсăртран ыраттарсан? Чĕтреме тытăнтăм.

– Сурăх çăмĕ касмалла. Кун пек хитре çанталăкра ĕçе вĕçлесен тем пекех аванччĕ те. Эсĕ пулăшсан тем пекехчĕ, – терĕ анне пĕлĕт еннелле тинкерсе.

Шухăша кайрăм. Ара, çăм каснă чухне ăна ниепле те пулăшаймастăп-çке. Ытла та пĕчĕк эпĕ. Çитменнине, ай, сурăхĕсем шухă! Иртнĕ эрнери пĕр пулăм пирки сире каласа парам-ха.

Картишре хĕвел ăшшинче тăратăп. Сасартăк çил тухрĕ те канфет хучĕ сурăх картине кĕрсе ӳкрĕ. Хитре хутсем пуçтаратăп эпĕ, çавăнпа унта васкарăм. Сурăхсем мана курсан тĕпĕрр! витене кĕрсе тарчĕç. Унтан тăруках каялла сирпĕнсе тухрĕç те ман урлă каçса сарайне кĕрсе тарчĕç. Йăлтах пылчăкпа вараланса пĕтрĕм. Юрать аманмарăм-ха. Тем курса ларасси пур.

Чим, ăçта кайса кĕчĕ йăлтăркка хут? Тем пек шырасан та тупаймарăм. Пĕр сурăхĕ утă тесе çисе ячĕ-ши? Выçă та усрамастпăр ĕнтĕ.

Çăм касиччен вĕсене алла вĕрентесчĕ. Анчах мĕнле? Пӳртрен çăкăр илсе тухрăм та хайхисене сăйлама шут тытрăм. Тамаша! Мана кушаксем, йытă, чăх-чĕп, хур-кăвакал, кăвакарчăнсем сырса илчĕç. Пурте анне кучченеçĕпе сăйланасшăн. Мăр-мăрĕ хул пуççи çине хăпарса ларчĕ, хам-хам ниçта кайса кĕрейми йăпăлтатать, автанĕ çунат çапса авăтать...

– Ме-е-ек! – тенипе шартах сикрĕм.

Аллăмри татăк çĕре ӳкрĕ. Çăкăр çине пурте сиксе ларчĕç. Ăна пĕри те теприн тутанасшăн ĕнтĕ. Юлашкине йытă йăвине йăтса кĕрсе кайрĕ. Чим, сурăхсене халĕ мĕнле алла вĕрентмелле тет? Килте урăх çăкăр çук. Васкаса кĕлете кĕтĕм. Савăта урпа тултартăм та кăтра пуççем патне васкарăм.

– Атя, кил кунта. Кăшт хăюллăрах пул, – тесе йыхăртăм пĕрне, мана шăтарасла пăхаканскере.

Чăн та, хайхискер мĕшĕлтетсе ман пата çитрĕ те витрери урпана кăмăллан çиме тытăнчĕ. Ыттисем пырĕччĕç те çав, анчах манран шикленеççĕ. Çук, ниçталла та пăрăнмастăп-ха. Хитре хута мĕн-ма хыпса çăтрĕç тата? Тупса парсан – урăхла калаçу.

Акă каллех çил тухрĕ те таçтан канфет хучĕ вĕçсе тухрĕ. Кап! çеç ярса илтĕм çăмăлскере. Савăннипе пӳрте чупса кĕтĕм те:

– Аппа, кур-ха! Халĕ манăн ялтăркка хут санран нумайрах, – терĕм хăпартланса.

– Уншăн сана парне параççĕим? – мăкăртатрĕ вăл кăмăлсăррăн.

Ним калама та çук. Тӳрех кӳренсе тутине тăсать. Кама хывнă вăл? Пĕлместĕп. Хам пĕртте апла мар. Авă ĕнер алла алăкпа хĕстертĕм. Тупата, куçран çулăм тухрĕ. Ыратнине çапах чăтрăм, куççуль кăлармарăм.



Сурăха тухса пăхам-ха, тырра çисе те ячĕ пуль. Ĕнтĕ ман çине юратса тинкерĕ вăл. Çăмне каснă чухне те лăпкăн çеç выртĕ.

Картише тухрăм. Чим, сурăхсем ăçта? Витере те, сарайĕнче те, пахчара та çук! Сехре хăпрĕ. Кĕлетре иккен вĕсем! Тырă çиеççĕ. Акă ĕне те унтах. Пурне те хулăпа хӳтерсе тухрăм. Пĕрин хырăмĕ пичĕке пек хăпарса тухнă. Ыттисенчен уйрăм мĕн ас тивнĕ-ши вăл?

Анне ĕçрен вăхăтра таврăнчĕ. Мĕн пулса ирнине тĕпĕйĕрĕпе каласан куçне чарса пăрахрĕ вăл.

– Турă çырлахтărах! Кӳпĕннĕ вăл, – тесе лаç еннелле чупрĕ.

Тăватă витре шыв сапрĕ сурăх çине. Унтан тепре, тепре... Хырăмĕ тинех лаш анчĕ кăтра пуçăн.

– Ыттисемпе ним те пулмастьши вара? – терĕм кĕç-вĕç макăрасла.

– Текехрен выльăхсене пиртен ыйтмасăр нимĕн те ан пар. Тем курса ларăпăр, – терĕ анне пӳрте кĕрсен.

Унпа килĕшсе пуçа сĕлтрĕм. Ĕнтĕ аннепе калаçма та именетĕп. Ара, айванлăха пула инкеке кĕрсе ӳкеттĕмĕр-çке. Çĕрĕпе лайăх çывăраймарăм. Ирхине вăрансанах картише чупса тухрăм. Турра шĕкĕр! Ĕнепе сурăхсем кăмăллăн кавлесе тăраççĕ. Тупата, малашне картари выльăхсене хамах пăхăп. Сылăха каçартармаллаçке.

Килте йăлтах йĕркеллĕ пулсан чунра та çав тери аван! Кĕçех аннепе çăм касăпăр. Атте хачăсене йĕркеллех хăйрарĕши?

# Ҫемьепе вулар-и?

**Виктор Драгунский**

## Тӗлӗнмелле кун



Темиҫе кун каялла эпир тӗнче уҫлӑхне вӗҫмелли «ракета» хатӗрлеме шухӑшларӑмӑр. Ун валли лаптӑкне те тасатрӑмӑр. Вырӑн турӑмӑр. Эпӗ ку ӗҫе хӑвӑрт туса пӗтеретпӗр тесе шухӑшланӑччӗ, анчах «космодром» халӗ те хатӗр мар-ха. Мӗншӗн тетӗр-и? Ара, эпир вӑл еплерех пулмаллине пӗлместпӗр-ҫке. Ҫитменнине «план» та ҫук. Вӑт ку чи кирли. Ҫакӑнтан пуҫламаллаччӗ те ӗнтӗ пирӗн.

Киле ҫитрӗм те хутпа ручка илсе мӗн кирлине ӳкертӗм. Кӗрсе тухмалли алӑксем, космонавтӑн тумтирне улӑштармалли тата ӑна тӗнче уҫлӑхне ӑсатмалли вырӑнсем. Ракетӑна сывлӑша вӗҫтерсе яракан кнопка ҫинчен те манмарӑм. Вӑл уйрӑмах лайӑх ӳкерӗнчӗ. «Космодром» планне сӑнланӑ хыҫҫӑн ракетӑна ӳкерсе хутӑм. Унта хӑпармалли икӗ картлашкана, космонавт ларакан кабинӑна, апатланмалли пӗчӗк кӗтесе те хут ҫине чӗрмелерӗм. Чим унӑн ҫӑвӑнмалла та вӗт-ха. Вара ятарласа икӗ витре ӳкертӗм, унта манӑн шухӑшпа ҫумӑр шывӗ пухӑнмаллаччӗ.

«Планпа» Аленкӑна, Мишӑна тата Костика паллаштартӑм. Вӗсене витресемсӗр пуҫне йӑлтах килӗшрӗ. Миша хайхисене хуратса хучӗ те:

– Капла лайӑхрах, – терӗ. Хирӗҫлекенсем тупӑнмарӗҫ.

Пустуй калаҫса вӑхӑта ирттерес темерӗмӗр, тӳрех ӗҫе пуҫӑнтӑмӑр. Мишӑпа иксӗмӗр йывӑр тимӗр татӑкӗпе ҫӗре тикӗслерӗмӗр. Аленка вара пирӗн хыҫҫӑн санталийӗпех таптаса пычӗ. Вӗрҫӗнӗскерсем унччен хӗрлӗ тӗслӗччӗ, тахӑш самантра тусанпа витӗнсе сӑрӑ тӗслӗ пулса тӑчӗҫ.

Лаптӑка таптаса пӗтернипе пӗрехчӗ ӗнтӗ, пирӗн пата Андрюша килсе ҫитрӗ. Хӑй ултӑ ҫулта пулсан та питӗ тавҫӑрулла ача. Ҫавӑнпа ӑна та хамӑр ушкӑна илтӗмӗр.

– Аленка! Апат ҫиме кӗр! – илтӗнчӗ хӗрарӑм сасси.

Хӗр ача килнелле чупрӗ.

– Унсӑрӑн тата лайӑхрах, – терӗ Костик.

– Шалккӑ. Ӗҫ вӑйӗччӗ вӗт-ха... – ассӑн сывларӗ Миша. Малалла пӗр чӑрӑнми тӑрмашрӑмӑр. Акӑ «космодром» хатӗр те. Миша та ав кӑмӑллӑн кулкалать.

– Ну, халь космонавта кама суйламаллине шухӑшламалла, – терӗ вӑл хӑпартланса.

– Эпӗ пулатӑп! Мӗншӗн тесен пуринчен те ҫӑмӑлтарах! – Андрюша малалла пӗр утӑм ярса пусрӗ.

– Вӑт тӗлӗнтермӗш! Эпӗ чирленӗ вӑхӑтра миҫе килограмм чакнине пӗлетӗн-и? Санран та сахалтарах татӑп пуль-ха! – хирӗҫлерӗ Костик.

Эпир Мишӑпа пӗр-пӗрин ҫине пӑхса илтӗмӗр. Ыттисем пирӗнсӗрӗх кам космонавт пуласси пирки калаҫҫҫӗ. Пӑхӑр-ха вӗсене!

Ку вӑййа хам шухӑшласа кӑларнине шута илмеҫҫӗ те апӑршасем. Космонавт камӑн пулмалли паллӑ ӗнтӗ кунта. Суйламалла та мар.

– Пурне те ӗҫ хушса, ертсе пыраканни камне мантӑр-и? Э? Эпӗ сире йӑлтах вӗрентсе пытӑм вӗт! Апла тӑк космонавт та манӑн пулмалла, – терӗ Миша кӗтмен ҫӗртен.

Ку вара мана питех те килӗшмерӗ.

– Атьӑр малтан «ракетӑна» туса пӗтеретпӗр! Кайран пулас «космонавта» суйласа ятарлӑ тӗрӗслев ирттерӗпӗр, – сӑмах хушрӑм эпӗ.

Пурте килӗшрӗҫ. Малалла ӗҫе пуҫӑнтӑмӑр. Инҫех те мар выртакан кивӗ пичкене йӑтса килтӗмӗр. Унта малтан пурӑ упранатчӗ. Юлашки вӑхӑтра вӑл никама та кирлӗ мар пек пӗр кӗтесре тӑратчӗ.

– Ку кабина пулать. Кунта чӑн-чӑн космонавт та вырнаҫма пултарӗ-тӗр. Епле сарлака вӑл, – терӗм пичкене тӑратса лартнӑ май.

Костик таҫтан кивӗ сӑмавар тупса килчӗ. Ӑна пичке ҫине вырнаҫтартӑмӑр. Ку – «горючи» ямалли хатӗр. Мишӑпа иксӗмӗр икӗ «иллюминатор» касса кӑлартӑмӑр.

### *«Горючи ӑҫта?!»*

Ӗҫ вӗресе тӑрать. Тимӗр татӑкӗсем, сӑрӑсем, пӑтасем, вӗрен тавраш тупса пичкене «илемлетрӗмӗр». Тимӗр татӑкӗсене «ракетан» ҫуначӗсем евӗр ҫапса хутӑмӑр. Сӑрӑсемпе йӑрӑм-йӑрӑм туса хитрелетрӗмӗр. Тата тем те пӗр шухӑшласа кӑлартӑмӑр. Пурне те каласа та пӗтерейместӗн. Акӑ «ракета» хатӗр. Миша сӑмавар ҫекӗлне пӑрса пӑхрӗ, унтан нимӗн те юхманнине асӑрхарӗ те кӗтмен ҫӗртен тарӑхса кайрӗ.

– Ку мӗне пӗлтерет?! – ҫухӑрчӗ хайхи Андрюшӑна – пирӗн «тӗп инженера».

– Мӗн пулчӗ?

Миша тата хытӑрах тарӑхрӗ пулас, хӑлха хупласла кӑшкӑрчӗ:

– Шӑп тӑр! Эсӗ тӗп инженер-и е ҫук-и?!

– Ну, эпӗ. Тупнӑ кӑшкӑрмалли сӑлтав, – хуравларӗ Андрюша.

– Сӑмаварта, тьху, бакра горючи ҫук! Пӗр тумлам та! Ӑҫта пӑхнӑ инженер? – ниепле те лӑпланаймасть хайхискер.

– Темех мар-ҫке.

– Кӑтартатӑп сана «темех мар»! – чышкине чӑмӑртарӗ Миша.

– Механик! Бака тултарӑр! – терӗм эпӗ Костик ҫине пӑхса. Вӑл хӑй «механик» пулнине ӑнланчӗ те витре йӑтса котельнӑйне чупрӗ. Самантранах ҫур витре вӗри шывпа таврӑнчӗ. «Ракета» ҫумӗнчи картлашка ҫине хӑпарчӗ те сӑмавара горючипе тултара пуҫларӗ.

– Горючи пур! Пурте йӗркеллӗ! – тет хӑй хашка-хашка.

Миша шӑп сӑмавар патне пӗшкӗннӗччӗ. Ҫаплах Андрюшӑна вӑрҫма чӑрӑнаймасть-ха. Унччен те пулмарӗ унӑн пуҫӗ тӑрӑх шыв юхма пуҫларӗ. Вӑл хӑш самантра айккинелле ыткӑнчӗ пуль. Пирӗн «бак» шӑтӑк иккен. Миша вара аванах йӗпенчӗ.

– Ҫапла кирлӗ те сана! – йӗкӗлтерӗ Андрюша. Лешӗ каллех чышкине чӑмӑртаса «инженер» еннелле утрӗ. Эпӗ нумай шухӑшламарӑм, вӗсен хушшине кӗрсе тӑтӑм .

### *«ВАСТОК-2» е «ВОСТОГ-2»*

– Итлӗр-ха! Эпир карапа мӗнле ят паратпӑр? – терӗм кӑмӑллӑн.

– «Торпедо», – терӗ Костик.

– «Спартак» е «Динамо», – хушрӗ Андрюша.

– Тата мӗн! Апла тӑк ЦСКА пултӑр! – терӗ Миша кӳренчӗклӗн.

– Эпир футбол пирки калаҫмастпӑр-ҫке! Манӑн шухӑшпа «Восток-2» ят памалла. Гагарин «Восток» караппа вӗҫнӗ вӗт-ха. Пирӗн вара иккӗмӗш «Восток» пулать, – терӗм эпӗ. – Миша, акӑ киҫтӗкпе сӑрӑсем, тыт.

Тусӑмӑр сас паллисене ҫырма пикенчӗ. Ытла тӑрӑшнипе ҫамки ҫине тар тумламӗсем те тухрӗҫ. Эпир куҫ илми пӑхса тӑратпӑр.

– Айккине пӑрӑнӑр-ха! Алла ҫыхлантаратӑр! – терӗ вӑл тарне шӑлса.

Мӗн хушнине турӑмӑр. Вӑл ҫырса пӗтериччен пулас космонавтсен юрӑхлӑхне тӗрӗслеме шут тытрӑм. Килтен кивӗ градусник чиксе тухнӑччӗ. Ҫавӑнпа Андрюшӑн температурине висрӗм. Ай-уй! Вӑт тамаша! Хӗрӗх саккӑр та ултӑ кӑтартать! Тӗлӗннипе тата хӑранипе алӑсемпе пуҫа та ярса тытрӑм. Ачасен температури ҫакӑн пек вӗри пулнине нихӑҫан та илтменччӗ-ха халӗччен.

– Ку мӗнле амак тата? Санӑн ревматизм е тиф марши? Хӗрӗх саккӑр та ulttӑ! Тӗлӗнмелле! Айккинерех пӑрӑн-ха. Ҫавӑнта тӑр, – терӗм куҫне чарса пӑрахнӑ Андрюшӑна.

– Халӗ мана тӗрӗсле! Космонавт пулас килет! – пырса тӑчӗ ума Костик.

Хӑйсем ҫӗртен пӗр шит ҫеҫ ҫӳллӗрех ӳснӗ-ха тата космонавт пуласшӑн! Вӑт япала!

– Эсӗ нумай пулмасть больницӑран тухрӑн. Ку – пӗрремӗшӗнчен. Сана аннӳ те космонавт пулма памасть! Апла пулсан та чӗлхӳне кӑтарт-ха, – терӗм тухтӑр пек ҫирӗппӗн калаҫса. Костик чӗлхине кӑтартрӗ.

– Ҫитӗ! Санӑн чӗлхӳ ытла вӑрӑм! Ун пеккисене космонавта илсен вӗсем уҫлӑх вӑрттӑнлӑхӗсене пурне те каласа парӗҫ. Ӑҫта мӗнле ҫӑлтӑр вырнаҫнӑ тата ыттине те. Эсӗ Ҫӗр ҫинчех пурӑнха хальлӗхе, – терӗм ӑна.

Ҫакна илтсен Костик хӗрелсе кайрӗ те чышкисене чӑмӑртарӗ. Вӑл мана тапӑнасшӑн иккенне курсан хам та алӑ тупанӗсем ҫине сурса кӗрешме хатӗрлентӗм. Сенкер экранпа боксерсем епле тӑнине курнӑччӗ-ха, манӑн та ҫапла тӑрас. Хӑрах урана мала хутӑм та кӗтетӗп.

– Ну, лекет-ха халь сана! – терӗ Костик.

– Сана вара икӗ хут вӑйлӑрах! – терӗм ним шикленмесӗрех.

Пӗр хушӑ шухӑшласа тӑрсан Костикӑн ҫилленни иртрӗ пуль.

– Ҫыхланас та килмест-ха, – мӑкӑртатрӗ вӑл.

– Тепрехинче сӑмах та ан чӗн! – терӗм хама ҫӗнтерӳҫӗ пек туйса.

– Эй! Костик, Дениска, Андрюшка! Ракетӑна пӑхма килӗр! – йыхӑрчӗ Миша.

Чупса ҫитрӗмӗр те сӑрӑпа ҫырнӑ карап ятне вуларӑмӑр. Йӑлтах йӗркеллӗ. Хитре ҫырнӑ, вӗҫӗнчи сас паллисем ҫеҫ каштах кукӑртарах.

– Вӑт вӑйлӑ! – хӗпӗртерӗҫ пурте. Эпӗ вара «ВАСТОК-2» тенине вуларӑм та нимӗн те чӗнмерӗм. Сӑрӑпа киҫтӗке илсе йӑнӑша тӳрлетрӗм. Иккӗшне те. Халӗ «ВОСТОГ-2» пулчӗ. Миша хӗрелсе кайрӗ пулсан та шӑп тӑчӗ.

– Хӑҫан ракетӑна вӗҫсе хӑпарма ирӗк паратӑр? – ыйтрӗ вӑл аллине ҫамки патне тытса. Эпӗ командир имӗш.

– Тепӗр сехетрен! – терӗм хыттӑн.

**(Малалли пулӗ).**

***Нина ЦАРЫГИНА* *куҫарнӑ.***

Шупашкар 2014

# «Раççей – спорт çĕр-шывĕ» форума хатĕрленнĕ май



* * *

Пĕтĕм тĕнчери спорт форумĕ çывхарса пынă май Шупашкарти 2-мĕш гимназире «Спортланди» уяв иртрĕ. Унта 5-11 классем хутшăнчĕç. Çак мероприятие Чăваш Республикин фитнеспа аэробика федерацийĕн Пĕрремĕш президенчĕ Оксана Юрьевна Вербина хутшăнчĕ, юпа уйăхĕн тăххăрмĕшĕнче ирхи зарядкăра ирттермелли хăнăхтарусемпе паллаштарчĕ. Владимир Михайлович Кузин депутат шкул ачисене форум паллине сăнлакан галстуксем парнелерĕ. Çавăн пекех хăвăрт утассипе чемпион ята тивĕçнĕ Вера Соколовăпа асăнмалăх сăн ӳкерĕнме май пулчĕ.

Пиллĕкмĕшпе улттăмĕш классем «Хаваслă старта» ăмăртрĕç. Çиччĕмĕш-вун пĕрмĕш классем вара станцисенче тупăшрĕç: сикесси, мечĕк çапасси тата ытти те. Чи хастаррисене уяв вĕçĕнче Хисеп хучĕпе чысларĕç. Çак кун пурне те хавaслă кăмăл-туйăмпа тивĕçтерчĕ.

*Надежда АРХИПОВА.*




* * *

Юлашки çулсенче пирĕн республика спорт мероприятийĕсемпе турнирĕсен тĕп центрĕ пулса тăчĕ. Массăллă спорт пурнăçа кĕчĕ. Шупашкарти Олег Беспалов ячĕллĕ 7-мĕш вăтам шкул ачисем сывă пурнăç йĕркине çирĕп пăхăнаççĕ. Нумаях пулмасть «Раççей – спорт çĕр-шывĕ» форума халалласа «Хастарлăх вăл – сывлăхпа ăнăçу» уяв иртрĕ. Унта Станислав Николаевич Львов депутат, бадминтон енĕпе ЧР призерĕсем тата спорт маçтăрĕн кандидачĕсем Екатерина Мартюшовăпа Денис Евграфов хутшăнчĕç. Çак кун шкулти чи лайăх спортсменсене чысларĕç. Спорт гимнĕ янăранă май ачасем депутатран форум паллиллĕ галстуксене тивĕçрĕç. Екатерина Владимировна çапла чĕнсе каларĕ: «Спорт – иленӳ çеç мар, вăл тата йывăр ĕç те». Çамрăк спортсменсене ăнăçу сунчĕ.

Уявăн кăсăклă саманчĕ – бадминтонçăсемпе ирхи зарядка туни. Микрорайонта пурăнакансем те çак хăнăхтарусене пурнăçлама хавaспах хутшăнчĕç.

Мероприяти «Атăл» стадионта спорт эстафетипе вĕçленчĕ. Унта 5 «а», 6 «а» тата 7 «б» классем çĕнтерчĕç.

Спортпа туслă пулмалла:
Сикмелле те чупмалла!
Кирлĕ пулĕ яланах –
Хатĕрлен кашни кунах.

*Яна ЗАЙЧЕНКО.*



* * *

«Килĕшӳлĕх, илем тата сывлăх валли ăслăлăхпа ӳнер пĕлĕвĕ çеç мар, кĕлеткене хускатакан хăнăхтарусемпе тата гимнастикăпа ĕçлени те кирлĕ», – тесе çырнă авалхи грек философĕ Платон. Ăслă çыннăн сăмахĕсен тĕрĕслĕхĕ пирки паянхи кун никам та иккĕленмест. Шупашкарти 24-мĕш шкул ачисем «Раççей – спорт çĕр-шывĕ», – тенине хастарлăхĕпе çирĕплетеççĕ.

Вĕренекенсенчен суйласа илнĕ волонтерсем ирсерен пысăк йышпа зарядка ирттереççĕ. Ку вăл кашни çынна савăнăç тата хавхалану парнелет. Уроксем хыççăн вара ачасем футболла тата баскетболла выляççĕ. Паянхи кун тĕлне 9 «б», 7 «и» тата 5 «б» классем малта пыраççĕ. Тăваттăмĕшсен черлидинг ăмăртăвĕнче «б» класс 1-мĕш вырăна тухрĕ, «а» – 2-мĕш.

Шкул ачисем тăван хулара спорт юхăмĕ мĕнле аталаннине сăнасах тăраççĕ. Çак кунсенче 5 «б» тата 9 «а» классем Çăлтăрпа зарядкăна тухрĕç. Пурнăçпа савăнса та хавхаланса пурăнакансем вара Нацисен кросне те хутшăнчĕç.

Ăс-тăна лайăх ĕçлеттерме, хамăра аван туйма пирĕн сывлăха упрама пĕлмелле. Спортпа туслă пулни, паллах, ачасене çанçурăмне çирĕплетме, кăмăл-туйăмне çĕклеме тата вĕренӳре нумай-нумай çитĕнӳ тума пулăшать.

*Саша ШИРТАНОВ.*

● АННЕНЕ ПУЛĂШАТĂП

## «Бонапарт» салат

**Салат валли 500 грамм шампиньон, çавăн чухлех чăх какайĕне кишĕр, 300 грамм сыр, 4 çăмарта, 2 çĕр улми, 2 пуç сухан, майонез кирлĕ.**

Кăмпана вакласа çу янă çатмара ăшалăр, тăварпа пăрăç хушса пăтратăр. Кишĕре терка витĕр кăларăр, çупа ăшаласа тăвар сапăр. Чăх какайĕпе çĕр улмине тăвар тата лавр çулçи янă шывра уйрăммăн пĕçерĕр. Сыра, çăмартана тата пиçнĕ çĕр улмине теркăпа хырăр, сухана вĕтĕ турăр та çупа ăшалăр.

Хатĕр çимĕçсене турилккене сийпе хурăр: çĕр улми, кăмпа, какай, сухан, кишĕр, çăмарта, сыр. Кашни икĕ сие майонезпа сĕрĕр.

## Бананпа печенирен хатĕрленĕ торт

**Çимĕçе янтăлама 1 килограмм тăварлă крекер, 4 пысăк банан, 1 литр хăйма, çур килограмм сахăр, 100 грамм шăккалат илмелле.**

Сахăрпа хăймана лăкамалла, банана çўхе çаврашкасем туса касмалла.

Çимĕçсене турилккене сийпе çак йĕркепе вырнаçтармалла: печени – хăйма – банан. Çиелте хăймапа сĕрнĕ крекер пулмалла. Торта вĕтетнĕ шăккалатпа сапса илемлетмелле те темиçе сехете сивĕтмĕше лартмалла.

## «Марина» салат

**Ку салата хатĕрлеме 1 кĕленче консервланă куккурус, 300 грамм купăста, 250 грамм краб ашĕ е патакĕ, çур лимон тата майонез кирлĕ.**

Краб ашĕпе купăстана вĕтĕ туратпăр. Купăстана лимон сĕткенĕпе хутăштарса 5 минут тытатпăр. Тарăн турилккере сĕткенне сăрăхтарнă куккуруспа хатĕр çимĕçсене ярса хутăштаратпăр та майонезпа пăтрататпăр. Салат хатĕр те.

## «Кĕрхи кун» салат

**Çимĕç валли 350 грамм чăх какайĕ, 2-3 помидор, çавăн чухлех пылак пăрăç, 2 хăяр, 100 грамм типĕтнĕ хура çăкăр (кириешки те юрать), 150 грамм сыр, 1 шăл ыхра тата майонез илĕр.**

Пĕçернĕ какая пысăккăс мар татăксем туса ваклăр та турилкке тĕпне хурăр. Кăшт пусăрăнтарăр. Улăм пĕрчи евĕр каснă помидора вĕтетнĕ ыхрапа хутăштарса какай çине вырнаçтарăр. Ытлашши сĕткене сăрăхтарăр. Пылак пăрăçа вăрринчен тасатса тăваткăлласа турăр, майонезпа тата ыхрапа пăтратăр та иккĕмĕш сий çине хурăр. Тепĕр сий – вĕтетнĕ хăяр. Унтан – майонез сĕрнĕ сухари. Çиелтен вĕтĕ теркăпа хырнă сыр сапăр. Салата сивĕтмĕше лартса 60 минут тытăр.

● РЕДАКЦИ ПОЧТИНЧЕН

Хисеплĕ Аня! Эпир сана çак халăх мелĕпе хатĕрленĕ маçпе усă курса пăхма сĕнетпĕр. Вăл сана пулăшасса шанатпăр.

1 апат кашăкĕ касторка çăвне пĕр чĕптĕм апат содипе хутăштармалла. Çывăрма вырттас умĕн çак хатĕрпе пигмент пăнчисене сĕрмелле те çиелтен бактерицидлă лейкопластырьпе çыпăçтармалла. Çак процедурăна пăнчăсем шураличчен тумалла. Енчен те ўт сисĕмлĕ-туйăмлă пулсан апат содине кăштах сахалтарах хушмалла.

*Хисеплĕ «Тантăш» редакци! Эпĕ Аня ятлă, вуннăмĕш класра вĕренетĕп. Пит çинче тата алăсенче пигмент пăнчисем нумай пулни мана питех те пăшăрхантарать. Çавна пула юлташсен умĕнче те хама аван мар туятăп. Пăнчăсенчен мĕнле хăтăлма пулать-ши?*

***Аня ВАСИЛЬЕВА.***

*Йĕпреç районĕ.*

● ИЛЕМ КĔТЕСĔ

## Пит валли – маскăсем

**Çулталăкăн кашни вăхăтĕнчех пите тутлăхлатакан, нўрĕклетекен тата ытти йышши маскăсем туни усăллă. Кĕркунне вара ўте пушшех те тимлĕх уйăрмалла. Типсе вистенесрен, кушăрхасран тата ытти пăтăрмахран сыхламалла. Çавна май килте хатĕрленĕ темиçе маска туса пăхма сĕнетпĕр.**

Вĕтеленсе ыратакан ўте лăплантарма çакăн пек маска пулăшĕ: пысăках мар кабачока лайăх вĕтетсе нимĕрлемелле. Сĕткенне пăрса сăрăхтармалла та пĕр çăмарта саррипе хутăштармалла. Пулнă хатĕре пите сĕрсе 15 минут тытмалла, лĕп шывпа çумалла. Хыççăн ўте лăплантаракан тоникпа сăтăрмалла.

Пĕр пĕчĕк баклажана лайăх вĕтетсе нимĕрлĕр, шĕвекне сăрăхтарăр. Нимĕре 1 апат кашăк пан улми сĕткенĕпе пăтратăр та хулăн сийпе пите сĕрĕр. 15 минут тытнă хыççăн сивĕрех шывпа çăвăнăр. Ўте тутлăхлатакан крем сĕрĕр. Çак маскăна эрнере пĕр хут, çывăрма выртас умĕн тумалла.

Пĕр апат кашăкĕ хăймана çавăн чухлех вĕтетнĕ петрушкăпа тата 10 тумлам А витаминпа хутăштарăр. Лайăх çуса тасатнă пите сĕрĕр те 15 минут тытăр. Лĕп шывпа çăвăнăр.

Пан улмие, пыла, тип çăва, аскорбин йўçĕкне пĕр пек виçепе илсе хутăштарăр. Хатĕре питпе мăя сĕрĕр, 15 минутран сивĕрех шывпа çăвăр. Ку маска типĕ ўте нўрĕклетме пулăшать.

● ТĔПЕЛТЕ

## Савăт-сапана тасататпăр

Хальхи вăхăтра савăт-сапа тасатмалли, çумалли хатĕр лавккара чылай. Апла пулсан та вараланнă çатмасемпе кастрюльсене унсăрăнах тасатма май пур. Сăмахран, пăхăртан тунă савăт-сапана е пĕр-пĕр япалана апат содипе, кетчуппа е тăварпа уксус хутăшĕпе çуса яма пулать.



Тĕксĕм пăнчăсемпе витĕннĕ эмаль савăта симĕс пан улмипе тасатмалла. Вараланнăскере шыв ямалла та пан улми хуппине хушмалла, унтан çулăм çине лартса кăштах вĕретмелле.

Тефлон витнĕ çатмана вĕр çĕнĕ пекех тума чустана кăпăшкалатмалли хатĕр (разрыхлитель для теста) пулăшĕ. Ăна пĕр стакан шывпа хутăштарса савăта ямалла та çулăм çине лартмалла. Вĕреме кĕриччен тытмалла. Кайран çемçе çĕтĕкпе çумалла.

Кастрюль тĕпне çунса ларнă пăтта савăта шыв тата хуппинчен тасатнă пĕр пуçлă сухан ярса 5-7 минут вĕретмелле те çуса тасатмалла.

Кĕленче савăтсем йăлтăртатчăр тесен вĕсене малтан тăварпа сăтăрмалла, унтан сивĕ шывпа чўхемелле.

● ТЕСТ

## Ырă çын-и эсĕ?



***Хирĕçў-харкашу тепĕр чухне пĕр-пĕрне ăнланманнипе çеç мар, эсĕ е вăл ытлашшипех вĕчĕрхеннĕрен те, кăмăл-туйăм япăх пулнăран та сиксе тухать. Тен, çывăх çынсем ман е сан пирки урăхларах шухăшлаççĕ. Апла тăк атьăр-ха хамăр кăмăла çак тестпа тĕрĕслесе пăхар.***

1-4 тата 7-9 ыйтусене «çапла», 5, 6 тата 10-мĕш ыйтусене вара «çук» тесе хуравланăшăн 1 балл ларт.

1. Аллунта çителĕклех укçа пур тейĕпĕр. Эсĕ вара ăна тăвансемпе юлташусем валли парне илсе пĕтеретĕн.
А. Çапла.
Ă. Çук.

2. Хĕр-тусу хăйĕн хуйхине санпа пайланă чухне ăна яланах тимлĕн итлетĕн.
А. Çапла.
Ă. Çук.

3. Çывăх юлташу шахматла санран начартарах вылять. Ăна кўрентерес мар тесе юриех выляса яратăн.
А. Çапла.
Ă. Çук.

4. Ушкăнри çынсен кăмăл-туйăмне çĕклентерес тесе яланах кулăшла самантсем, анекдотсем калатăн.
А. Çапла.
Ă. Çук.

5. «Хура кулăш» тенине килĕштеретĕн-и?
А. Çапла.
Ă. Çук.

6. Сана тахçан такам начар тунине нумай вăхăт ас тăватăн.
А. Çапла.
Ă. Çук.

7. Хăвăнпа калаçакана яланах тимлĕн итлетĕн. Калаçу теми сана интереслентермесен те чăтăмлăн кĕтетĕн.
А. Çапла.
Ă. Çук.

8. Кампа та пулин тавлашнă чухне хирĕç чĕнекен шухăшне тимлĕн итлетĕн.
А. Çапла.
Ă. Çук.

9. Çынсем хушнине, ыйтнине яланах пурнăçлатăн-и?
А. Çапла.
Ă. Çук.

10. Ушкăнри пĕпĕшўсен кăмăл-туйăмне çĕклеме чи çывăх тусунтан та тăрăхлама пултаратăн.
А. Çапла.
Ă. Çук.

**Пĕтĕмлетў**

***4 балран сахалтарах.*** Сана ырă çын тееймĕн. Çывăх çынсемпе те, юлташусемпе те тепĕр чухне каварлашма пултаратăн. Вĕсене хăвăнтан пистерес мар тесен ăшăнрах калаçма, пулăшма тăрăш.

***4-8 балл.*** Хăвна кампа епле тытмаллине эсĕ аван пĕлетĕн. Хăшне-пĕрне яланах пулăшма хатĕр, теприсене – нихăçан та.

***8 балран ытларах.*** Эсĕ хутшăнма, калаçма юрататăн. Ырă чунушăн çывăх çынсемпе тусусем те хаклаççĕ. Санăн юлташ чылай, йывăр вăхăтра эсĕ вĕсене яланах пулăшма хатĕр.

*Нина ЦАРЫГИНА (тел. 56-11-80) хатĕрленĕ.*